ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Март 21 ШАМАТКУН № 59 (8968)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

ВЦСПС X-мĕш пленумĕ (1 стр.).

КПСС Чăваш обкомĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Верховнăй Совет Президиумĕ, Облпрофсовет тата КПСС Шупашкар хула комитечĕпе Совет исполкомĕ Чăваш Академи театрĕ 35 çул тултарнă ятпа саламлани (1 стр.).

Ф. Осипов.—Аслă Сталин вĕрентнине ĕçре пурнăçлăпăр (2 стр.).

ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИ ĔÇНЕ ВАЙЛАТАССИШĔН: Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсем 1953 çулта финанспа хуçалăх ĕçĕсен планне срокчен тултарма социализмлă обязательство илнĕ (2 стр.).

ВАРМАН ХАТЕРЛЕВĔ: **И. Матвеев.**—Пуян техникăпа лайăхрах усă курмалла (2 стр.).

А. Федоров. Тутарстан нефть республики пулать (2 стр.).

ЧĂВАШ ТЕАТРĔ 35 ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ: **Б. Алексеев.**—В. И. Ленин сăнарĕ чăваш сцени çинче. **А. Кăлкан.**—Пархатарлă ĕç. **Л. Агаков.**—Халăх артистки (3 стр.).

К. Иванов.—Усĕм çулĕ çинче (3 стр.).

Клемент Готвальда пытарни (4 стр.).

ЧĂВАШ СОВЕТ ИСКУССТВИНЕ МАЛАЛЛА АТАЛАНТАРАССИШĔН

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ советлă Тăван çĕршыва малалла аталантарма чаплă малашлăх уçса параççĕ.

Сталин юлташ социализмла экономикăн тĕп законĕ—«чи çÿлте тăракан техника никĕсĕ çинче социализмла производствăна вĕçĕмсĕр ÿстерсе тата лайăхлатса пырса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси» пулать, тесе вĕрентет.

Совет çыннин творчествăлла ĕçĕ, вăл коммунизм строительствин кирек мĕнле участокĕнче ĕçлет пулсан та, пысăк ăнланулăх çинче, коммунизм строительствин аслă задачисене ăнланса илни çинче никĕсленсе тăрать. Çавăнпа та пирĕн саманара идеологи ĕçĕ, халăха коммунизмла воспитани парасси, халăх хушшинче совет патриотизмне сарас ĕç уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. «Идеологиллĕ ĕç,—тенĕ Г. М. Маленков юлташ партин Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă докладра,—партин чи пысăк обязанноçĕ пулса тăрать, ку ĕçе хакламанни партипе государство интересĕсене пысăк сиен кÿме пултарать. Социализмла идеологи влиянийĕ вайсăрланни яланах буржуăлла идеологи влиянийĕ вăйланнине пĕлтерет,—çакна пирĕн кирек хăçан та асра тытас пулать».

Хисеплĕ те ответлă задачасем тăраççĕ литературăпа искусство работникĕсем умĕнче. Вĕсен ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре партие куллен пулăшса пымалла, хăйсен творчествипе миллионшар ĕççыннисене ленинла-сталинла аслă идейăсен çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме хавхалантармалла. Искусство работникĕсен задачи вăл—пурнăçра тĕл пулакан чир-чĕрсене уçса палăртса, вĕсене пĕтерессишĕн кĕрешесси, социализмла харпăрлăха тустаракансемпе кахалсене, наянсене, партипе государство дисциплинине пăсакансене, бюрократсене тăрă шыв çине кăларса, çавнашкал чир-чĕрсене пĕтерес ĕçре партие пулăшса пырасси пулать. Çакăнпа пĕрлех совет искусствин малта пыракан совет çыннисен лайăх енĕсене пур енчен те туллин уçса кăтартмалла. «Общество пурнăçĕнче çĕннине, ыррине пăхса ÿстерес тата кивеллине, пăнтăхса кайнине тымарĕпех пĕтерес тĕлĕшпе пыракан аслă кĕрешÿре пирĕн литературăпа искусство работникĕсен тивĕçĕ калама çук пысăк» (Г. Маленков).

Çак задачăсене марксистла-ленинла теорие çине тăрса вĕренмесĕр, пурнăçа куллен сăнаса пымасăр, работниксен ăсталăхне ÿстерсе пымасăр пурнăçлама май çук. Искусствăна ăнăçлă аталантарас ĕçре критикăпа самокритика пысăк вырăн йышăнса тăрать. Искусство работникĕсен Сталин юлташ: шухăшсен кĕрешĕвĕсĕр, критика ирĕклĕхĕсĕр нимĕнле наука та аталанма пултараймасть, тесе кăтартса панине яланах асра тытса тăрас пулать. Критикăпа самокритикăна анлăн аталантарнă никĕс çинче кăна ĕçри ситменлĕхсене пĕтерме пулать.

Пирĕн республикăри искусство работникĕсем юлашки вăхăтра чылай творчествăлла ситĕнÿсем турĕç. 1952 çулта пулса иртнĕ Пĕтĕм Российăри художество выставкине Чăваш АССР-ĕнчи художниксем Е. А. Ноздрин, Р. М. Ермолаева тата скульптор И. Ф. Кудрявцев хутшăнма чыслă право илчĕç. Вĕсен ĕçĕсене жюри пысăк вырăна хурса хакланă. Чăваш композиторĕсен çĕнĕ юррисемпе музыкăллă произведенийĕсем халăх хушшине анлăрах та анлăрах сарăлма пуçларĕç.

Чăваш государство академи театрĕн коллективĕ творчествăлла пысăк ситĕнÿсем турĕ. Вăл паян Чăваш театрĕ пуçланни 35 çул тултарнине палăртать. Халăх хăйĕн театрне чĕререн юратать. Халăх актерсемпе режиссерсене хисеплет, вĕсен творчестви ÿссе пынине куллен асăрхаса тăрать. Çакă вăл театр работникĕсене хăйсен ĕçĕ çине тата ытларах тимлĕ пăхма, идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ вырăнта тăракан, художество тĕлĕшĕнчен пур енчен те пулса ситнĕ лайăх спектакльсем хатĕрлесе кăтартма хушать. Анчах ку тĕлĕшпе пирĕн театр спектакль куракансем умĕнче çаплах пысăк парăмра тăрать-ха. Вăл паянхи ыйтусене сутатса паракан, чĕрене хумхантаракан спектакльсем сахал лартса парать-ха. Ку тĕлĕшпе ĕççыннисем умĕнче драматургсем те пысăк парăмра. Пирĕн драматургсем çаплах пурнăçра нимĕнле конфликт та çук текен сиенлĕ «теорирен» хăтăлса ситеймен-ха. Çакă вăл пирĕн театр искусствине пысăк сиен кÿнĕ. Çак «теорие» пула çĕнĕ пьесăсен пахалăхĕ начарланнă. Чăвашла пьесăсем сахал пулни театрсене тулли репертуар тума кансĕрлет.

Юлашки вăхăтра чăваш театрĕнче лартса панă пьесăсем: Максимов-Кошкинский çырнă «Константин Иванов», Ф. Трофимов хатĕрленĕ «Чакка» пьесăсем идейăпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен пулса ситейменни палăрчĕ. Çавăн пекех Н. Айзман çырнă «Ăмăртупа юрату», А. Кăлкан çырнă «Çывăх çăлтăрсем»—вăйсăр пьесăсем пулчĕç, Л. Родионов çырнă «Сенкер кÿлĕ» пьесăна та куракансем тивĕçлипе критиклерĕç.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем пирĕн драматургсене çĕнĕ, пысăк пахалăхлă произведенисем çырма анлă малашлăх уçса пачĕç. Совет çыннисем драматургсенчен пурнăçа пур енчен те туллин сутатса паракан пьесăсем кĕтеççĕ.

Пулса ситеймен, шупка произведенисем тухни вăл, чылай енчен, пирĕн творчествăллă организацисенче çаплах критика çителĕксĕр пулнинчен килет. Час-часах пăсăк пьесăсене ырланисем те пулаççĕ. Çакна ăна чăваш совет писателĕсен союзĕн драма секцийĕн ĕçĕнче те, художниксемпе композиторсен союзĕсен ĕçĕсенче те курма пулать.

Пĕр-пĕрне вырăнсăр мухтани, пĕр-пĕрин ситменлĕхĕсене витсе пыни, критикăна шута илменни—çаксем вĕсем, паллах, творчествăна тивĕçлипе аталантарма пулăшмаççĕ, вĕсем сиен кăна кÿме пултараççĕ. Критикăпа самокритика творчествăна вăйлăн ÿстермелли чи шанчăклă хĕçпăшал пулса тăрать.

Çакна та йышăнас пулать: пирĕн чылай пьесăсемпе музыка произведенийĕсем идейăпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен, авторсем халăх умĕнчи хăйсен ответлăхне тивĕçлипе туйса ĕçленĕ пулсан, чылай пахарах пулма пултарнă. Актерсемпе режиссерсен те ялан çак туйăмпа ĕçлемелле. Совет çыннисен идейăпа культурăллă шайĕ нихçанхинчен те ытла ÿснĕ. Çакна творчество работникĕсен ялан асра тытас пулать. Вĕсен пурнăçран, хăйĕн халăхĕнчен пĕр утăм та кая юлмалла мар, ялан малта пымалла.

Пирĕн социализмла обществăра кашни çыннăн—заводра ĕçлет-и вăл, фабрикăра-и, колхозра-и, театрта-и, пурпĕрех—хăйĕн ăсталăхне ÿстерсе пымалла. Театрсемпе музыка коллективĕсен творчествине ÿстерес ĕçре творчествăллă вĕренÿ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Филармонире, театрсен коллективĕсенче творчествăллă вĕренÿ пулманни илемлĕ пысăк произведенисем тăвас ĕçре чăрмав кăна кÿрет.

Искусство работникĕсем хăйсен творчествипе коммунизм строительствине активлă хутшăнаççĕ. Коммунизм строительствин аслă задачисем искусство работникĕсене хăйсен произведенийĕсем çине пĕтĕм ответлăха туйса пăхма, хăйсен идейăллă-политикăллă тавракурăмне тата пултарулăхне пур майсемпе те ÿстерсе пыма хушаççĕ. Творчествăра ячĕшĕн тунă ĕç, халтура пулмалла мар.

Пирĕн творчество работникĕсен, Ленин—Сталин партийĕ искусствăна аталантарассишĕн куллен тăрăшнипе хавхаланса, совет халăхĕ хăйĕн искусствине чĕререн юратнине асра тытса коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн, пĕтĕм тĕнчипе мир ĕçне тĕреклетессишĕн паттăррăн кĕрешекен совет халăхне тивĕçлĕ илемлĕ произведенисем пама тăрăшмалла.

Чăваш халăхĕн культура строительствинче паллă вырăн йышăнса тăракан куна—Чăваш государство академи театрĕ вăтăр пилĕк çул тултарнă куна—паллă туса, орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем пирĕн искусство работникĕсем хăйсем умĕнче тăракан пысăк та ответлă задачăсене малашнехи ĕçре чыслăн пурнăçласса шанса тăраççĕ.

Заказсене срокчен пурнăçлаççĕ

ЕРЕВАН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ереван хулинчи электромашинăсем тăвакан завод ĕнер «Сталинградгидрострой», Сурçĕр-Крым тата Кăнтăр-Украина канавĕсен строительствисем валли куçса çÿрекен электростанцисем, трансформаторсемпе генераторсем тиесе янă. Ку продукцие кăсалхи иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталсенчи заказсен шучĕпе туса хатĕрленĕ.

Лекцисем ирттереççĕ

КУКЕÇ. Çак кунсенче КПСС райкомĕн библиотекинче И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикăлла произведенине вĕренекенсем валли лекци пулчĕ. Лекци теми—«И. В. Сталин социализмран коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ тĕп условисем çинчен».

КПСС райкомĕн библиотеки партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем çинчен лекцисен циклне ирттерме тытăнчĕ.

ВЦСПС X-мĕш пленумĕ

Çак кунсенче Пĕтĕм Союзри профессиллĕ союзсен Центральнăй Совечĕн X-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум В. В. Кузнецов юлташа, ăна СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ пулма уйăрса лартнă пирки, ВЦСПС председателĕн ĕçĕсенчен хăтарнă, председатель пулма Н. М. Шверник юлташа уйăрса лартнă.

ВЦСПС пленумĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне çыру янă. Унта çапла каланă:

Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Иосиф Виссарионович **Сталин** пирĕнтен уйрăлса кайнă хурлăхлă кунсенче, пирĕн çĕршыври халăхсемшĕн хурлăхлă кунсенче, Пĕтĕм Союзри профессиллĕ союзсен Центральнăй Совечĕн X-мĕш пленумĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне çапла шантарса калать: профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисен анлă массисене Тăван Коммунистсен партийĕ унăн Центральнăй Комитечĕ тавра малалла пĕтĕçтерес тĕлĕшпе, пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли аслă ĕçе пурнăçлама кĕрешĕве çĕклес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç, ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕкçуллăха тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва тата анлăрах сарса ярĕç, рабочисемпе служащисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлĕç.

Атăл çинчи аслă стройкăра

ЖИГУЛЕВСК (Куйбышев облаçĕ), мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Атăл тăрăхĕнче çуркуннехи ăшă кунсем тăраççĕ. Жигули сăрчĕсем хура тĕслĕ курăнакан пулчĕç. Сăртсем çинчен юр шывĕ юхать. Атăл çинчи пăр тĕксĕмленнĕ, хĕллехи çулсем таçтанах курăнса выртаççĕ.

Куйбышев гидроэлектростанцине тăвакансем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Котлована çурхи шыв ан кĕтĕр тесе, хурçă юпасем çапса тунă забор патне пиншер кубометр тăпра купаламалла. Купаламалли тăпрана самосвалсемпе вĕçĕмсĕр турттараççĕ. Самосвал шоферĕсем хушшинче Кочура тата Глущенко юлташсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни сменăра норма тăрăх 12 хут тăпра турттарса пырас вырăнне, 20 хут турттарса пыраççĕ.

Котлован чавнă çĕрте те хĕрсех ĕçлеççĕ. Хăшпĕр çĕрте котлован тарăнăшĕ 35 метра ситнĕ. Çĕр айĕнчен тухакан шыв котлованра ĕçлеме ан чартăр тесе, шыва уçласах тăраççĕ.

Трубопроводсене шăратса сыпăçтарнă çĕрте Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте чапа тухнă электросварщик Социализмлă Ĕç Геройĕ Алексей Улесов ĕçлет. Вăл сменăри задание виçĕ хут, виçĕ хут çурă тултарать. Алексей Улесов çав вăхăтрах чылай электросварщиксене хăй пек хăвăрт ĕçлеме вĕрентнĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте чапа тухнă экскаваторщик Социализмлă Ĕç Геройĕ Иван Ермоленко ертсе пыракан бригада та тухăçлă ĕçлет. Унăн бригади хăшпĕр кунсенче 3.000 кубометр тата ытларах та тăпра чавса кăларать.

Çĕнĕ Магнитогорск

Магнитогорск сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче ÿссе ларнă хула. Анчах çак çамрăк хулара пурăнакансем хулан кивĕ пайĕ тата çĕнĕ пайĕ пуррине лайăх кураççĕ. Урал юханшывĕн сулахай енче пĕрремĕш пилĕкçуллăхра туса лартнă Магнитогорска кивĕ хула теççĕ. Ăна металлурги комбиначĕпе пĕр вăхăтра тунă. Кунта çичĕ хутлă тата сакăр хутлă çуртсем, металлургсен культура двореçĕ, А. С. Пушкин ячĕпе тăракан драма театрĕ туса лартнă.

Урал юханшывĕн тепĕр енче, темиçе километр сарлакăш сарăлса выртакан пысăк пĕве патĕнче, вăрçă хыççăнхи вăхăтра хулан çĕнĕ пайне тума тытăннă.

— Ку вăл пирĕн çĕнĕ Магнитогорск,—теççĕ металлургсем.

Магнитогорскра пурăнакансем хăйсен хулипе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Кунта пурте çĕнĕ: пурăнмалли çуртсем те, шкулсем те, магазинсем те. Çав вăхăтрах хулара пурте йĕркеллĕ, ăна тахçанах, нумай çул каялла туса лартнăн туйăнать. Çакă вăл пурăнмалли çуртсем тунă вăхăтрах хулара благоустройство ĕçĕсене те туса пынинчен килет. Строительсем çуртсен стенисене купалаççĕ, çав вăхăтрах урамсене, тротуарсене, килкартисене асфальт сараççĕ, çĕрлехи вăхăтра урамсене çутатма фонарьсем çакаççĕ, нумай çул ÿснĕ йывăççем лартаççĕ.

Хулара чи лайăх архитекторсен проекчĕсем тăрăх туса лартнă пысăк çуртсем хăйсен илемĕпе куçа илĕртеççĕ. Проектсем тăвакансем те, строительсем те çуртсенче пурăнакансемшĕн лайăх пултăр тесе тăрăшаççĕ. Хваттерсенче ванна пÿлĕмĕсем, холодильниксем, мусоропроводсем пур. Çуртсен аялти хучĕсенче магазинсем, тĕрлĕрен мастерскойсем вырнаçнă. Килкартисенче—пĕчĕк садсем, чечек пахчисем. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра çĕнĕ Магнитогорскра пурăнмалли çуртсем çĕршер пин тăваткал метр туса лартнă.

Хулара строительство ĕçĕ сарăлсах пырать. Кăçал пурăнмалли çуртсем 80 пин тăваткал метр чухлĕ туса пĕтермелле. План тăрăх Советсен çурчĕ (çÿлĕ çурт), çĕнĕ культура двореçĕ (унта 1.500 çын вырнаçмалăх зал пулмалла), опера театрĕ, чугун çул вокзалĕ, аслă шкулсемпе вăтам шкулсем валли çĕнĕ çуртсем тумалла. Пысăк площадьре культурăпа кану паркĕ тăваççĕ. Урал юханшывĕн çыранĕсене гранитпа хытараççĕ.

Çĕнĕ Магнитогорск çывăхĕнче рабочисемпе служащисем хăйсене валли лартнă çуртсен поселокĕ пур. Кунта та пĕрмаях çĕнĕ çуртсем лартаççĕ. Хитре çуртсем тавра садсем чĕртнĕ. Сад ĕçне юратакансем металлургсен хулине чечекленекен сад пек туса хурасшăн.

Урал юханшывĕн ылтăм çыранĕнче 500 гектар çинче металлурги комбиначĕн сад хуçалăхĕ вырнаçнă. Кунта çимĕç йывăççисем нумай лартса ÿстернĕ.

План тăрăх çĕнĕ Магнитогорск тавра йывăççем лартса ÿстереççĕ, парксем тата çимĕç сачĕсем чĕртеççĕ.

Магнитогорск (ТАСС).

И. В. Сталинăн „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем“ ятлă произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренеççĕ

ТАШКЕНТ. Узбекистанри ĕççыннисем И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тĕплĕн вĕренеççĕ. Парторганизацисем çĕршер кружоксемпе семинарсем организациленĕ, лекцисем, теориллĕ конференцисем, докладсемпе каласусем ирттереççĕ.

Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн членĕсем Узбекистанри хуласемпе кишлаксенче çичĕ пин лекци вуланă. Партипе совет тата наука работникĕсем, Ташкентри аслă шкулсенчи преподавательсем 350 çынна яхăн хулари промышленность предприятийĕсемпе учреждениссенче лекцисем вулаççĕ.

Бухарăра, Андижанра, Ленинскра, Чирчикра, Каганра, Ангренре, Наманган облаçĕнчи чылай колхозсенче марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма ялан ĕçлекен лекторисем тунă. (ТАСС).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсен хисеплĕ ятне памалла тăвасси çинчен

Чăвашсен государство академи театрĕ 35 çул тултарнă май, совет театр искусствин енĕпе çитĕнÿсем тунăшăн Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕн хисеплĕ ятне памалла тăвас:

1. Таисия Николаевна **Евсеева** артисткăна;
2. Борис Семенович **Марков** артиста;
3. Ефим Никитич **Никитин** артиста;
4. Виктор Иосифович **Родионов** артиста;
5. Георгий Фадеевич **Фадеев** артиста.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули,
1953 çулхи мартăн 19-мĕшĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективне

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Верховнăй Совет Президиумĕ Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективне, театрăн творчествăллă ĕçĕ 35 çул тултарнă ятпа, саламлаççĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрĕ Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн çуралса аталанма пуçланă. Çак театра организацилени тата унăн ĕçĕ ленинла-сталинла наци политики çĕнтернине, Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви чăваш халăхĕшĕн, унăн форма тĕлĕшпе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурине чечеклентерессишĕн атте пек тăрăшнине кăтартса параççĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрĕ 35 çул хушшинче, Коммунистсен партийĕн идеологи ыйтăвĕсем тăрăх паракан директивисене пурнăçласа пырса, актерсен кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлес тата ĕççыннисен анлă массине спектакльсем кăтартас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерчĕ. Театр хăйĕн ĕçĕпе чăваш халăхĕн театр искусствине аталантарма чылай пулăшрĕ тата ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

КПСС обкомĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Верховнăй Совет Президиумĕ çакна шанса тăраççĕ: театр коллективĕ тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармĕ, спектакльсен идейăллă-художествăллă шайне, актерсен ăсталăхне ÿстерес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕ.

КПСС обкомĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Верховнăй Совет Президиумĕ Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективне совет искусствин ялавне çÿлте тытса пыма, социализмла реализмăн меслетне вĕренсе пырса совет халăхĕн нумай енлĕ пурнăçне кăтартса паракан, çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене пĕтлекен тата совет çыннисене хĕрÿллĕ патриотизм, халăхсен никам çĕмĕрейми туслăхĕ майлă воспитани паракан, Ленин—Сталинăн аслă партине вĕçĕ-хĕррисĕр юратма тата парăнса тăма вĕрентекен спектакльсем кăтартма ыра сунать.

КПСС Чăваш обкомĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективне

Профессиллĕ союзсен Чăваш область Совечĕ Чăваш Академи театрĕн коллективне унăн творчествăллă ĕçĕ 35 çул тултарнă ятпа саламлать.

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви куллен тăрăшнипе пула, Чăвашсен Академи театрĕ хăйĕн творчествăллă ĕçĕнче çитĕнÿсем турĕ, чăваш халăхĕн форма тĕлĕшĕнчен нациллĕ, содержани тĕлĕшĕнчен социализмла культурине аталантарас енĕпе чылай ĕç турĕ.

Театр хăй ĕçлеме пуçланăранпа тата творчествăллă çитĕнÿсем тунă 35 çул хушшинче искусствăн чăн-чăн мастерĕсене сахал мар ÿстерсе çитĕнтерчĕ, республикăри ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас енĕпе пысăк ĕç турĕ.

Профессиллĕ союзсен Чăваш область Совечĕ Чăвашсен Государство Академи театрĕ 35 çул тултарнă кун унăн коллективне республикăри ĕççыннисене хамăрăн Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн юратма, Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствине парăнса тăма воспитани парас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлеме, творчествăра çĕнĕ çитĕнÿсем тума ыра сунать.

Профессиллĕ Союзсен Чăваш область Совечĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрне

Паян Чăвашсен Государство Академи театрне тунăранпа 35 çул тултарать. Çакă вăл—орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисен пурнăçĕнчи паллă событи. Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики чечекленсе пырать. Промышленноçпа ялхуçалăхĕ вăйланнипе республикăри ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕ лайăхланать, культури ÿсет. Чăваш çĕршывĕ пурте хут пĕлекен çĕршыв пулса тăчĕ, ялсенче ачасене пурне те çичĕ çул вĕрентесси, хуласенче пурне те вăтам пĕлÿ парасси пурнăçланса пырать, чăвашсен илемлĕ литературипе профессиллĕ искусствине туса хунă.

Пирĕн çĕршывра социализмла культура чечекленни социализмла строй капитализмла стройран малта тăнине яр-уççăн кăтартса парать. Совет культури коммунизмăн аслă та пархатарлă идейисене сарать, вăл пĕтĕмпех коммунизмпа пролетариллĕ интернационализм шухăшлă. Çакна эпир пирĕн юбилярăн ĕçĕсенче те куратпăр. Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернине пула туса хунă театр — Чăвашсен Государство Академи театрĕ коммунизмăн активлă строителĕсене воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чăваш республикинче культурăна искусство тунă çитĕнÿсенче Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви ССР Союзĕнчи халăхсен пĕтĕм культурине чечеклентерессишĕн питех те хытă тăрăшни лайăх палăрать.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, Чăваш çĕршывĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле, Чăваш республикинчи юратнă театрăн уявне хаваслăн тата савăнăçлăн палăртаççĕ. КПСС хула комитечĕпе ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ Чăвашсен государство академи театрĕн коллективне чаплă юбилей ячĕпе—театра тунăранпа 35 çул тултарнă ятпа саламлаççĕ, идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ шайра тăракан, чăн-чăн пурнăçа кăтартакан, совет çыннисен пуян ăс-хакăлне тата культурлăхне сутатса паракан, чăваш халăхне социализмла Тăван çĕршыва чунчĕререн парăнса тăма воспитани паракан спектакльсем хатĕрлес ĕçре творчествăллă çĕнĕ çитĕнÿсем тума ыра сунаççĕ.

Мухтавлă юбиляра тата унăн мĕнпур работникĕсене—хĕрÿллĕ салам!

КПСС Шупашкар хула комитечĕ. Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăвашсен государство академи театрĕн работникĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăласси çинчен

Чăвашсен государство академи театрĕ 35 çул тултарнă май, театрăн уйрăмах палăрнă работникĕсене ĕçре çитĕнÿсем тунăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăлас:

1. Иван Николаевич **Алексеев** артиста;
2. Рона Ивановна **Ананьева** артисткăна;
3. Александр Иванович **Бубнов** артиста;
4. Петр Никифорович **Ванюшин** артиста;
5. Нестор Петрович **Виноградов** артиста;
6. Константин Иванович **Иванова** — театрăн главнăй режиссерне;
7. Петр Иванович **Иванов** артиста;
8. Вера Кузьминична **Кузьмина** артисткăна;
9. Игнатий Осипович **Молодов** артиста;
10. Никита Петрович **Петрова**—театрта ĕçлекен столяра;
11. Николай Степанович **Степанов** артиста;
12. Дарья Максимовна **Столярова** артисткăна;
13. Алексей Константинович **Ургалкин** артиста;
14. Роман Филиппович **Филиппов** артиста;
15. Николай Алексеевич **Эллене**—театр директорне;
16. Зоя Димитриевна **Ярдыкова** артисткăна.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули,
1953 çулхи мартăн 19-мĕшĕ.

Аслă Сталин вĕрентнине ĕçре пурнăçлăпăр

Чунтан юратнă çулпуçăмăр, тăван Сталин юлташ пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайрĕ. Çак йывăр кунсенче совет çыннисем Ленин—Сталин партийĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçрĕç, вилĕмсĕр Сталин вĕрентсе хăварнисене туса çитерме, хамăр çĕршывра коммунизм обществи тăвас ĕçе, пĕтĕм вăя хума тупа турĕç.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле эпир те, сталинла саманара вĕренсе ӳснĕ çĕрĕç механизаторĕсем, колхоз стройне малалла чечеклентерессишĕн, юратнă Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн вăя хĕрхенсе тăмăпăр.

Эпĕ ертсе пыракан виççĕмĕш трактор бригади 1952 çулта Жданов ячĕпе тăракан, «Молодая сила» тата «Победа» колхозсен уй-хирĕсенче ĕçлесе, производство планне 116 процент тултарчĕ. Чурачăк МТС-ĕнчи бригадăсем хушшинче сарăлнă социализмла ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Эпир горючи 5 процент перекетлерĕмĕр. Бригадăсем хушшинче куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав халĕ те пирĕн алăра.

Пирĕн çĕршывра ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçĕн генилле организаторĕ тата хавхалантаракан Иосиф Виссарионович Сталин юлташ пире техникăпа тĕрĕс усă курма, ялхуçалăх ĕçĕсене ытларах та ытларах механизацилеме, çĕрĕç культурине хăпартса пыма вĕрентрĕ. Аслă çулпуçăн кăтартăвĕсене эпир пурнăçласа пырăпăр.

Н. Григорьевпа Л. Осипов, В. Дмитриевпа В. Петров трактористсем «ДТ-54» тракторсемпе иртнĕ çулта 1.400-шер гектар сухаланă чухлĕ ĕç турĕç, ытти механизаторсем те вĕсенчен юлмарĕç. МТС-па виçĕ колхоз хушшинче тунă договорсенче кăтартнă пур тĕрлĕ ĕçсене те эпир иттерсе тултартăмăр. Çакă виçĕ колхозра та ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлеме тата малашне тырпулпа техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстермелли çирĕп никĕс тума май пачĕ.

1953 çулта çĕрĕç механизаторĕсем умĕнче тата пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăх производствин отраслĕсене ытларах механизацилеме, тракторсемпе ытти машинăсен ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерме кăтарту пачĕ. Çавна май кăçал МТС-па колхозсем хушшинче тунă договорсенче çĕнĕ ĕçсем тума йышăннă.

Эпĕ ертсе пыракан бригада хамăр ĕçлекен «Победа» колхоз валли хĕллехи кунсенче чугун çул станцинчен минераллă удобрени кӳрсе пачĕ. Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе механизаторсен тата специалистсен чĕнĕвне йышăннă хыççăн эпир тракторсем валли ятарласа çунасем турăмăр, халĕ вĕсемпе уй-хире выранти удобрени кăларатпăр.

Ялхуçалăх ĕçĕнчи ответлă тапхăр—сураки кунĕсем çывхарса çитеççĕ. Пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ хальхи кунсенче колхозниксемпе механизаторсем. Эпир сураки ĕçĕсене кĕске срокра тата лайăх туса иртерес задача лартрăмăр. Бригадăри трактористсем çав задачăна чыслăн пурнăçлас, социализмла ăмăртура кăçал та малти вырăна тухас тесе тăрăшса ĕçлеççĕ. 1953 çулта эпир трактор ĕçĕсен планне тата ытларах иртерсе тултарма, колхозсен уй-хирĕсенче кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă пухса кĕртме, çавăн пекех техникăллă культурăсемпе выльăх апачĕн тухăçлăхне ӳстерме, государство укçа-тенкине чылай перекетлеме сăмах паратпăр. Çапла ĕçлеме вĕрентрĕ пире ĕмĕр асран кайми юратнă Сталин, Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн çавăн пек кĕрешме чĕнеççĕ пире тăванла Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви.

Ф. ОСИПОВ,
3-мĕш бригада бригадирĕ, Чурачăк МТС-ĕ.

Навигацие тимлĕн хатĕрленетпĕр

Атăл тăрăх грузсем тата пассажирсем турттарасси çултан-çул ӳссе пырать. Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан суднăсем çӳремелли канал ĕçе кĕнĕ хыççăн тата Куйбышев гидростанцийĕпе Сталинград гидростанцине тума тытăннăранпа Атăлăн халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсрĕ.

Шупашкар пристанĕн коллективĕ кăçалхи навигацие вăхăтра тата пысăк пахалăхпа хатĕрленсе çитме, 1953 çулхи государство планне срокчен тата иртерсе тултарма социализмла обязательство йышăнчĕ. Коллектив грузсем ăсатмалли плана ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарма, топливо перекетлеме, грузсем турттарассин хăйне ларакан хакне чакарма, тупăш илмелли плана 102 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕ. Йышăннă обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн рабочисем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

Пристань суднăсене юсаса çитерет. Пассажирсем турттаракан катер, Атăл леш енне кайса килекенсене йышăнакан дебаркадер навигацие хатĕр. 2907-мĕш дебаркадер çинче пассажирсем валли каюта пулать тата буфет уçаççĕ. Чылай суднăсене халĕ сăрлаççĕ тата смалапа сĕреççĕ.

Çитес навигацире пристань кирек мĕн чухлĕ сулăсем те ăсатма пултарать. Сулăсене коммунизмăн аслă стройкисем патне вăхăтра илсе çитересси вăрманпромхозсем сулă тăвас ĕçе хăвăртлатнинчен нумай килет. Çуркунне шыв тулли пулать, çавăнпа сулăсене затонсенчен кăларма çăмăл. Каярахпа буксирлă пăрахутсем ытти грузсем турттарма кирлĕ пулаççĕ. Приволжски, Мари вăрманпромхозĕсен тата ытти организацисен те сулăсене хăвăртрах туса пĕтерес пулать.

1952 çулхи навигацире пристань хулари строительство организацийĕсем валли 35 пин тонна ытла хăйăрпа грави баржăсемпе кӳрсе килчĕ. Çав материалсене крансемпе тиесе пушатнă. Стройкăсен ыйтăвĕсене шута илсе, пристань кăçал 54 пин тонна хăйăрпа грави кӳрсе килме палăртрĕ. Хăйăр пушатма баржа çине вырнаçтарнă кран пулать. Строительство материалĕсем турттарма 600 тонна таран груз пĕр харăс турттаракан баржăсем уйăратпăр.

Пристань коллективĕ, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем совет çыннисене чĕнсе калани çине ответлесе, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçме, хамăр çĕршывра коммунизм обществи туса çитерессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешме тупа турĕ.

А. БОГОЯВЛЕНСКИЙ,
Шупашкарти пристань начальникĕ.

Вăрман хатĕрлевĕ

Пуян техникăпа лайăхрах усă курмалла

Вăрман промышленноçĕ ку чухнехи чи хăватлă техникăпа хĕçпăшалланать. Вăрман хатĕрлесси хăвăртăн механизациленет. Халĕ мĕнпур йывăр ĕçсене техника тăвать тесен те тĕрĕс пулать. Техникăпа пĕлсе тата туллин усă курсан, вăрман хатĕрлекенсем ĕç тухăçлăхне хальхинчен нумай ытларах ӳстерме пултараççĕ.

Çак çулсенче Йĕпреç вăрманпромхозне çĕнĕ техника нумай панă. Вăл шутра автомашинăсем, тракторсем, вагон çине пĕренесем тиемелли кран, пĕренесене сортласа уйăрмалли транспортер тата ытти механизмсем те пур. Вăрманпромхозра вĕсене хăвăртрах хута ярас, вĕсемпе туллин усă курас ĕç питех те сӳрĕккĕн пырать. Çавна пула механизмсемпе тумалли ĕçсен планĕ тулса пымасть. Иртнĕ çулта автомашинăсемпе йывăç турттарса кăлармалли плана 80 процент кăна тултарнă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта та ĕçсем çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пыраççĕ.

Пĕренесене сортласа уйăракан транспортера кĕркуннех хута ямалла пулнă. Ăна хута яни ĕçе хăвăртлатнипе пĕрлех, грузчиксен шутне чылай чакарнă, вĕсен ĕçне тĕпренех çăмăллатнă пулĕччĕ, автоэлектрокранпа тухăçлăрах ĕçлеме пулăшнă пулĕччĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсем хăватлă механизма хута яма васкамаççĕ.

Мĕншĕн-ха кунта пуян техникăпа туллин усă кураймаççĕ? Вăрманпромхоз руководителĕсем ĕçе тĕрĕс организацилемен. Цехсем пĕр-пĕрин нушине пĕлмеççĕ, килĕштерсе ĕçлес вырăнне, хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлеççĕ.

Çакна нумай тĕслĕхсемпе кăтартса пама пулать. Вăрманпромхозра 33 автомашина. Вĕсенчен çуррине яхăн пăсăк пирки гаражра ларать. Тепĕр чухне юсавлă автомашинăсемех ĕççĕр тăраççĕ е вăрмана кайсан та пушăлла таврăнаççĕ, мĕншĕн тесен складсенче кăларса хунă йывăç çук. Автобазăпа вăрманти складсем хушшинче ĕçлĕ çыхăну çук пирки шоферсем йывăç шыраса вăрман тăрăх çӳрени те пайтах пулать. Çапла вара шоферсем сменăра иккĕ хутлăс вырăнне аран-аран пĕрре кайса килме ĕлкĕреççĕ.

Тракторсем пирки те çавнах каламалла. Вĕсем кăçал та, пĕлтĕрхи пекех, япăх ĕçлеççĕ. Тепĕр чухне çул хĕррине тракторсемпе лашасенчен те сахалтарах йывăç турттарса кăлараççĕ. Япăх ĕçлени тен трактористсем хăйсен ĕçне пĕлменнинчен килет пулĕ? Çук, апла мар. Трактористсем лайăх вĕреннĕ, хăйсен ĕçне юратакан çынсем. Пĕтĕм чăрмав — тракторсемпе ĕçлеме условисем туса паманнинчен килет. Çуллахи ăшă кунсенче тракторсем валли чуркăсем хатĕрлесе типĕтмен. Чĕрĕ чуркăсене юр айĕнчен чавкаласа кăларса çунтараççĕ. Чурка чĕрĕ пирки тракторсен вăйĕ кирлĕ таран пулаймасть. Йывăçсене кăкарса турттарма троссем сахал. Склад патне илсе тухмалли çулсене вăхăтра хатĕрлемеççĕ. Çул начар пирки трактористсем тухăçлăн ĕçлеймеççĕ. Çавăн пиркиех складсене тĕрлĕ тĕле салатса пĕтерме тивет. Склада илсе тухнă йывăçсене сыпăлассине те питĕ начар организациленĕ.

Вăрман пункчĕсенче тракторсем тăратмалли вырăн çук. Трактор пăсăлас-мĕн пулсан ăна çийĕнчех юсаса хута ярайманççĕ, кашни гайкăна 15—17 километрти мастерскоя кайса илес пулать.

Вăрманпромхоз руководителĕсен, партипе комсомол, профсоюз организацийĕсен çитменлĕхсене халех пĕтерме тăрăшмалла. Вĕсем, чи малтан, пур цехсене те пĕр тĕллевпе, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса ĕçлеттермелле. Техникăпа туллин усă курма условисем тумалла. Кунпа пĕрлех рабочисем хушшинче ăмăрту сарса, кашни çынна хăйĕн творчествăллă пултарулăхне кăтартма çул уçса памалла.

И. МАТВЕЕВ.

Чăваш ялхуçалăх институчĕн агрономи факультетĕнчен вĕренсе тухакан А. И. Кузнецов юлташ çырнă дипломлă ĕçе питĕ лайăх хак панă. Вăл çĕрулми тухăçлăхĕпе пахалăхĕ ăна лайăх пăхса ӳстернинчен килни çинчен çырнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. И. Кузнецов юлташ лабораторире.

С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Потребительсен кооперации ĕçне вăйлатассишĕн

Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсен 1953 çулта финанспа хуçалăх ĕçĕсен планне срокчен тултарма социализмла обязательство илнĕ

Çĕнĕ пилĕкçуллăхра, промышленноçпа ялхуçалăх производстви ӳссе пыни, çавăн пекех тата ССР Союзĕн наци тупăшĕ пысăкланса пыни тавар çаврăнăшне малалла вăйлатса пыма лайăх условисем туса параççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн директивисем тăрăх потребительсен кооперацийĕн тавар çаврăнăшне чылай вăйлатмалла, халăха тавар сутас ĕçе малалла лайăхлатса, халăх таварсем ыйтнине туллирех тивĕçтерсе пымалла, суту-илӳпе хатĕрлев ĕçĕн материальнă-техникăллă никĕсне лайăхлатмалла.

Çĕнĕ пилĕкçуллăх ваккăн суту-илӳри тавар çаврăнăшне вăйлатас енĕпе кăларса тăратнă задачăсем потребительсен кооперацийĕн работникĕсене ĕçри çитменлĕхсене кĕске срокра пĕтерме тата совет суту-илĕвне çĕнĕ тата çӳлерех пусăма хăпартма хушаççĕ.

Эпир, Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсем,—тенĕ обязательствăра, — 1953 çулхи план çинчен сӳтсе явса, халăх тата колхозсем тавар ытларах туянасшăн пулнине, хамăрăн ĕçри майсене, потребительсен кооперацийĕн малта пыракан организацийĕсен ĕç опытне шута илсе, социализмла ăмăртăва тухатпăр тата хамăр çине çакăн пек социализмла обязательствăсем илетпĕр:

1. Ваккăн суту-илӳ тумалли тавар çаврăнăшĕн çулталăкри планне, обществăллă апатлану предприятийĕсен оборочĕпе пĕрле, 1953 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма тата планран иртерсе халăха 350 пин тенкĕлĕх тавар сутма пулатпăр.

2. Культурăллă совет суту-илĕвне анлă саратпăр, таварсен ассортиментне пысăклататпăр, халăхăн таварсем туянас енĕпе ӳссе пыракан ыйтăвĕсене пур майсемпе те тивĕçтерме тăрăшапăр. Халăха куллен кирлĕ таварсене яланах çителĕклĕ таран сутма пулатпăр.

3. Выранти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ туса хатĕрленĕ таварсене, халăхран ялхуçалăх продукчĕсем илме çирĕплетсе панă хакпа сутăн илсе хатĕрленĕ ялхуçалăх продукчĕсене тавар çаврăнăшне хутшăнтарма пулатпăр, çав таварсемпе ялхуçалăх продукчĕсен хисепĕ пĕтĕм оборотра 7 процентран кая мар пулмалла.

4. Чайнăйра вĕри апат тата закускăсем обязательнăй ассортиментра кăтартнинчен ытларах пулмалла. Обществăллă апатлану предприятийĕсенче ĕçри тата тавар çаврăнăшĕнчи тăкаксене 5 процент чакармалла, çавна ĕç тухăçлăхне ӳстернипе тата накладной расходсене чакарнипе тумалла.

5. 1953 çулта ялхуçалăх продукчĕсемпе чĕртавар хатĕрлемелли тата халăхрач сутăн илмелли плана пур енĕпе те Сталинла Конституци кунĕ тĕлне—1953 çулхи декабрĕн 5-мĕшне тултарма пулатпăр.

6. 1953 çулта пай укçи пухмалли тата кооперацине çĕнĕ членсем илмелли плана 110 процент тултаратпăр.

7. Суту-илӳри тăкаксене планпа палăртнинчен 0,5 процент чакармалла тата суту-илӳри тăкаксене тавар çаврăнăшĕ планĕн 8,11 процентĕ чухлĕ çес хăвармалла.

8. Планпа палăртман тăкаксем тумастпăр; 1953 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана 110 процент тултармалла тата 374 пин тенкĕ услам илмелле.

9. Кооперации пурлăхне мĕнле сыхласа усранине çирĕп контроллесе тăмалла. Çулталăк хушшинче мĕнпур ялпосене документсем тăрăх икĕ хутчен ревизи тумалла. Шыраса илмелли парăмсен хисепне нормăна пăхнинчен 40 пин тенкĕ таран чакаратпăр.

10. 1953 çулта пур магазинсемпе ларексене те, складсене те тата кантурсем вырнаçнă çуртсене те юсаттаратпăр.

11. Бухгалтери учетне йĕркеллĕ туса пырассишĕн тăрăшма, уйăхри балансcемпе кварталсен отчечĕсене срокчен икĕ кун малтан тăратма, вĕсене лайăх хатĕрлеме пулатпăр.

Эпир, Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсем, республикăри потребительсен кооперацийĕн мĕнпур работникĕсене пирĕнтен пример илме, 1953 çулхи хуçалăх ĕçĕсен планĕсене тултарассишĕн тата иттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва тухма чĕнетпĕр.

ЕЛЧĔК РАЙОНĔНЧИ ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН РАБОТНИКĔСЕН ПĔРЛЕХИ ПУХĂВĔНЧЕ СӲТСЕ ЯВСА ЙЫШĂННА.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултармалла

КАНАШ. Районти хăшпĕр ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Маленков ячĕпе, Пушкин ячĕпе тăракан, «Коммунар», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче укçа-тенкĕ пухмалли плана яланах вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ: ку колхозсенче заем укçине пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ, 1953 çулшăн аванс шучĕпе ялхуçалăх налогĕ пухасси ăнăçлă пырать.

Анчах та район, пĕтĕмĕшпе илсен, укçа-тенкĕ пухас ĕçре чăтма çук кая юлчĕ. Район пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 65 процент кăна тултарнă, заем укçи пухас ĕç уйрăмах питĕ начар тăрать. Вырăскас Пикшик, Каракăлă, Йăлмачча, Сиккасси, Ачча, Кармами ял Совечĕсем кварталти плана 30—40 процент кăна пурнăçланă.

Районта укçа-тенкĕ пухас ĕç япăх пыни райисполкомăн финанс пайĕ çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пыманнинчен килет. Финанс пайĕ налог агенчĕсене заданисем панипех лăпланса ларать, вĕсем мĕнле ĕçленине куллен-кун тĕрĕслесе тămасть.

«Искра», «Комсомол», Ворошилов ячĕпе, Горкин ячĕпе, Шверник ячĕпе тăракан колхозсем укçа-тенкĕ парăмĕсене халĕ те парса татман.

Суйлав кампанийĕ пынă вăхăтра ĕçсыннисем хăйсен пухăвĕсенче вырăнти Советсен депутачĕсене наказсем пачĕç. Вĕсем хăйсен наказĕсенче укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатма, ку ĕçре ялти активпа тачă çыхăну тытса ĕçлеме хушса хăварчĕç. Наказсене пурнăçлама пур майсемпе те тăрăшас пулать.

И. КУЗЬМИН.

Пирĕн Тăван çĕршыв çĕнĕ пилĕкçуллăхра

Тутарстан нефть республики пулать

Сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра лартнă аслă задачăсене татса парас ĕçре нефть промышленноçĕ — социализмла экономикăн тĕп отраслĕсенчен пĕри уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Партин XIX-мĕш съезчĕ панă директивăсенче нефть промышленноçне хăватлăн аталантарма палăртнă: çĕршывра нефть кăларассине пилĕк çул хушшинче 85 процент ӳстермелле. Çак ĕçре Тутарстан нефтяникĕсем паллă вырăн йышăнмалла.

Тутарстан чăннипех те нефтьпе питех те пуян республика пулса, пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пырать. Юлашки ик-виçĕ çул хушшинче республикăн хĕвелтухăçĕпе кăнтăр енчи вуншар районĕсем урăхланса çĕнелчĕç. Ĕлĕкрех нефтĕн питех те пысăк запасĕсем пуррине те пĕлмен вырăнсенче кĕске вăхăтрах çĕршер вышкăсем ӳсе-ӳсе ларчĕç, вуншар предприятисем туса ĕçе кĕртнĕ, çĕршер километр тăршшĕне нефть юхтарса тăмалли трубопроводсем хурса тухнă, урăлпирĕ темиçе вуншар километр тăршшĕне скважинăсен факелĕсем илемлĕн ялкăшаççĕ.

Нефть скважинисене пăраласси тата строительство ĕçĕсем кунран-кунах анлăн сарăлса пыраççĕ. Иртнĕ 1952 çулта Тутарстан нефтяникĕсем нефть кăларас тата çĕнĕ скважинăсем пăралас ĕçре паллă çитĕнӳсем турĕç, планран иртерсе çĕршыва пиншер тонна нефть пачĕç. Пирĕн çĕршывра 1952 çулта кăларнă пĕтĕм нефть хисепĕнчен 40 процентне Атăлпа Урал хушшинчи нефть промыслисем панă.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра палăртнă тăрăх, Тутарстанри нефть промышленноçĕ çĕршыв валли халичченхинчен темиçе хут ытларах нефть кăларса пама тытăнмалла. Çапла вара, Тутарстан çитес виç-тăват çул хушшинчех нефть республики пулса тăрĕ.

Нефтяниксем валли çĕнĕ пилĕкçуллăхра пысăк хуласем, поселоксем, клубсем, больницăсем, шкулсем, магазинсем, çăкăр пĕçермелли механизациленĕ заводсем, прачечнăйсем туса лартмалла. Тутар республикин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи нефть районĕсем асфальт сарнă шоссе çулĕсемпе витĕнсе çитĕç. Çавăн пекех тата çĕнĕ пилĕкçуллăхра Агрыз — Пронино — Сургут чугун çулне туни те, ăна Хусан, Уфа тата Куйбышев чугун çулĕсемпе çыхăнтарсан, Тутар республикинчи нефть промышленноçне тата та хăвăртрах аталантарма май парать. Халĕ çак чугун çула тăвас ĕçсем анлăн сарăлчĕç.

Сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план кăларса тăратнă аслă задачăсене пурнăçласа, «Бугульманефтьстрой» трестĕн коллективĕ халĕ рабочи поселоксем, производство предприятийĕсем тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тăвас ĕçсене кунран-кун анлăн сарса пырать. Трестри каменщиксемпе платниксен, штукатурсемпе малярсен тата ытти ăстаçăсен вуншар бригадисем, стахановла меслетсемпе ĕçлесе, производство заданийĕсене яланах срокчен тултарса пыраççĕ.

Строительсем Бугульмари нефтяниксем валли кашни виçĕ кунта пĕр хутлă, икĕ е тăвата хваттерлĕ çĕнĕ çурт туса хатĕрлеççĕ. Нефтяниксен поселокĕнче, кунсăр пуçне, кашни уйăхрах икĕ хутлă, вунултă хваттерлĕ çĕнĕ çуртсем хутшăнса пыраççĕ. Куç умĕнчех ӳсе-ӳсе лараççĕ нефтяниксен илемлĕ хулисем. Нефть районĕсен сăн-сăпачĕ питĕ хăвăрт урăхланса çĕнелет.

Акă, «Бавлынефть» трестĕнчи ĕçсенех илер. Нумаях пулмасть кăна-ха кунта сĕм вăрман кашласа ларнă. Халĕ ĕнтĕ пăхатăн та тĕлĕнсех каятăн: мĕн тери çĕнелсе урăхланчĕ юлашки çулсем хушшинче Бавлă çĕрĕ! Çулĕ тусем çинче, вăрманĕсенче, тракторсем нумай пулмасть кăна-ха сухаланă хирсенче, çырма-çатрасенче, ял хĕррисенче е урам варринчех,—пур çĕрте те нефть вышкисем çитĕнсе ларчĕç. Вышкăсем нумайлансах, çăралансах пыраççĕ. Каçсерен вара питĕ нумай факелсем пĕтĕм таврана ярах çутатса яраççĕ.

Аçта пăхнă унта — промышленность предприятийĕсем, нефтяниксем валли туса лартнă икĕ хутлă илемлĕ çуртсем. Ĕлĕк çуран утса тухма та май пулман вырăнсенче халĕ асфальт сарнă çап-çутă çулсем тунă. Бавлă çĕрĕн сăн-сăпачĕ кунсеренех çĕнелсе, урăхланса пырать.

Бавлă — Тутарстанри нефть промышленноçĕн малтанхи никĕсĕ. Пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартса панине пурнăçласа, Коммунистсен партийĕ пăхса çитĕнтерне инженерсемпе техниксем, хастарлă буровиксемпе промысловиксем кунти сăрт-тусен тĕпĕнче нумай ĕмĕрсем хушши пытанса выртнă пуянлăха — девон нефтьне ытларах кăлараççĕ.

Бавлăри нефтяниксен ĕçне халĕ Тутарстанра кăна мар, аслă Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенче те лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Нефть кăларакан икĕ промысла, пăралакансен кантурне тата нефть промышленноçĕн ытти чылай предприятийĕсене пĕрлештерсе тăракан «Бавлынефть» тресчĕ çĕршыври нефтяниксен социализмла ăмăртăвĕнче малта пырать. Тутар АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Тутар крайкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ виççĕмĕш çул ĕнтĕ Бавлăри промысловиксен аллинче çирĕппĕн сыхланса тăрать.

— Эпир — совет çыннисем, аслă Сталин çарĕн салтакĕсем, — тет иккĕмĕш промысел заведующийĕ, ватă нефтяник-коммунист Шариф Гусейнович Мамедзаде. — Пирĕн пĕрмаях малалла каймалла, хамăр та ӳсмелле, промышленноçа та малалла аталантармалла.

Нефтяниксем хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Темиçе çул каярах колхозсенче сухаçă, акаçă, конюх, бригадир пулса ĕçленĕ çынсем халĕ нефть промышленноçĕн ăста кадрĕсем пулса тăчĕç. Нефть кăларакан операторсем тата ытти специалистсем скважинăсене лайăхрах ĕçлеттерес, нефть ытларах кăлармалла тăвас тĕлĕшпе нумай рационализаторла сĕнӳсем параççĕ. Çав сĕнӳсене анлăн ĕçе кĕртсе пынипе «Бавлынефть» тресчĕн пĕрремĕш промыселĕн коллективĕ халĕ кашни уйăхрах государство укçине вуншар пин тенкĕ перекетлесе хăварать, кăларакан нефтĕн хăйне ларакан хакне нумай чакарса пырать.

Акă, «Бавлынефть» трестĕнче чапа тухнă буровой мастерăн М. Нургалеев юлташăн ĕçне илсе кăтартар. Вăл, Бавлă районĕнчи колхозник ывăлĕ, çамрăклах нефть промыселне пынăскер, ахаль рабочирен паллă буровой мастер-скоростник пулса тăчĕ. Халĕ ун çинчен республикăра анчах мар, пĕтĕм çĕршывĕпе ырă чап сарăлчĕ.

Мастер-скоростник М. Нургалеев юлташ икĕ çулталăк каярах, нефть скважинисене трубобурпа, хăвăрт пăраламалли меслетпе пăралама тытăнса, Тутарстанри буровиксем хушшинче патриотла çĕнĕ юхăм пуçарса ячĕ. Çак патриотла юхăм нефтяниксем хушшинче сарăлсах пычĕ.

М. Нургалеевăн бригади çĕнĕ пилĕк çуллăхăн иртнĕ икĕ çулĕнче виçĕ çулталăк планне тултарчĕ. Çак бригадăн коллективĕ «Бавлынефть» тресчĕн промыслинче 8 скважина пăраласа пачĕ. Вĕсем пурте икĕ пин метр тăрăнăш девон скважинисем. Вĕсене пурне те плапа палăртнă срoксенчен 25—45 кун маларах ĕçе кĕртсе пынă. Бригада иртнĕ икĕ çулталăк хушшинче, хăвăрт меслетпе ĕçленине пула, государствăна 2 миллиона яхăн укçа-тенкĕ перекетлесе панă. М. Нургалеевăн бригади срокчен пăраласа пĕтернĕ кашни скважинăран промысловиксем çĕршыв валли планран иртерсе нумай çĕршер тонна нефть кăларса пачĕç.

Тутарстан нефтяникĕсем партин XIX-мĕш съезчĕ хăйсем умне лартнă аслă задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн пысăк хастарлăхпа ĕçлени çинчен питех те нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Акă, «Бугульманефть» тресчĕн нефть кăларакан паллă мастерĕ, Тутар АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ коммунист Курбан Агапович Валеев юлташ ертсе пыракан бригадăна илер. Ку бригада нефть кăларас тĕлĕшпе государство панă заданисене кашни уйăхрах 5—10 кун малтан тултарса пырать, Тăван çĕршыва планран иртерсе нумай вуншар тонна «хура ылтăн» парать.

Нефть кăларассине пĕрмаях ӳстерсе пырасси, пуринчен ытла, буровиксем промысловиксене кунтан-кун çĕнĕ скважинăсем парса пынинчен килет. Пăралакан кантурсен коллективĕсем хăйсем умĕнче тăракан çак ответлă задача пĕлтерĕшне лайăх ăнланаççĕ. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ вĕсем çĕнĕ пилĕкçуллăхра нефть кăларас тĕлĕшпе лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

«Татнефть» пĕрлешĕвĕн промыслисен коллективĕсем 1952 çулта, унчченхи çулпа танлаштарсан, 1,9 хут ытларах нефть кăларнă, пĕр тонна нефть кăларассин хăйне ларакан хакне 9 процент чакарнă, ĕç тухăçлăхне планран иртерсе 25 процент ӳстернĕ.

Тутарстан нефтяникĕсем 1953 çулта нефть кăларас, çĕнĕ скважинăсем пăраласа ĕçе кĕртес тата капитальнăй строительство ĕçĕсене сарса пырас тĕлĕшпе 1952 çулхинчен икĕ хут ытларах мероприятисем туса иттермелле. Кăçал буровиксен промысловиксем валли çĕршер çĕнĕ скважинăсем пăраласа памалла.

1952 çулта çĕнĕ скважинăсем пăраласси, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах ӳснĕ. Тутарстанри нефть скважинисене пăраласси çапла пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пыни вăл Атăлпа Урал хушшинче нефть промышленноçĕн хăватлă базине — «Иккĕмĕш Баку» районне тăвас тĕлĕшпе Коммунистсен партийĕ, аслă Сталин куллен тăрăшнинчен килчĕ.

Тутарстанри нефть промышленноçĕ ку чухнехи хăватлă техникăпа пуянлансах пырать. Промысловиксемпе буровиксем валли кăçал «В-2-300» маркăллă хăватлă дизельсем, 500 лаша вăйлă дизельсем, хăватлă насуссем тата ытти тĕрлĕ механизмсемпе машинăсем татти-сыпписĕр килсе тăмалла. Скважинăсем пăралас ĕçре хăватлă техникăпа анлăн усă курса пыни буровиксене кашни уйăхрах пĕр станок пуçне вăтамран 500—600 метр тăрăнăш скважинăсем пăралама май парать. Малта пыракан вуншар буровой мастерсем пĕр станок пуçне уйăхра 1.000 метр е унтан та ытларах тăрăнăш скважинăсем пăралаççĕ. Нефть кăларассине ӳстерсе тата хăвăртлатса пырас тĕлĕшпе кăçал мĕнпур промыселсенче тата буровойсенче республикăри малта пыракан нефтяниксен ĕç меслечĕсене анлăн сарасси тĕп вырăн йышăнмалла.

Тутарстанăн хĕвелтухăç районĕсенче геологине разведка ĕçĕсене анлăн туса пынă май, юлашки ик-виç çулталăк хушшинче республикăра промышленноçлă нефтьпе газ запасĕсене тата та ытларах шыраса тупнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Тутар АССР составĕнче нумаях пулмасть виççĕмĕш область—Бугульма облаçĕ туса хунă. Бугульма облаçĕ вăл пĕтĕмĕшпех нефть облаçĕ пулса тăрать.

Пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Тутарстанри нефтяниксем те Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсене пурнăçлассишĕн вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă йывăр та хурлăхлă кунсенче, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Тутарстанри нефтяниксем пурте партин XIX-мĕш съезчĕн директивисене, пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли аслă программăна пурнăçлассишĕн, нефть промышленноçне хăватлăн аталантарса пырассишĕн вăя шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕç.

А. ФЕДОРОВ.

Хусан хули.

1918 ЧĂВАШ ТЕАТРĔ 35 ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ 1953

Пархатарлă ĕç

Театр! Мĕн тери нумай пĕлтерĕшлĕ çак сăмах! Мĕнешкел хаклă вăл пирĕн совет çыннисемшĕн!

Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн Ленин—Сталинăн аслă партийĕ театр искусствине, пĕтĕм совет искусствине хакланă пекех, питĕ çӳлĕ вырăна хурса хаклать, ăна малалла аталантарса чечеклентерессишĕн куллен-кун тăрăшать, пур енĕпе те яланах пулăшса пырать.

Паян эпир Чăваш государство академи театрĕ 35 çул тултарнине чысласа уявлатпăр. Ку вăл—пĕтĕм чăваш халăхĕн уявĕ, мĕншĕн тесен пирĕн театр пурнăçĕ пĕтĕм халăх пурнăçĕпе çыхăнса тăрать.

Чăваш государство академи театрĕ иртнĕ 35 çул хушшинче нумай пархатарлă ĕç турĕ. Çак хушăра вăл темиçе пин хут тĕрлĕрен спектакльсем кăтартнă, вĕсене темиçе çĕршер пин ĕççынни курнă.

Пирĕн юбилярăмăр творчествăллă тĕрĕс çул çинче—социализмла реализм çулĕ çинче тăнине, унăн коллективĕнче талантлă артистсемпе артисткăсем, режиссерсемпе художниксем пуррине, вĕсен творчествăллă мастерлăхĕ ӳссе пынине кăтартса паракан тĕслĕхсем сахал мар.

Çакна чи малтанах театрăн хăйĕншĕн çеç мар, пĕтĕм чăваш искусствишĕн паллă çитĕнӳ пулса тăнă «Пăшаллă çын» спектакль уççăн кăтартса парать. 1947 çулта эпир чăваш сцени çинче аслăран та аслă çулпуççен — В. И. Ленинпа И. В. Сталин сăнарне курса хавхалантăмăр. Ку савăнăçа пире РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. А. Алексеев тата Чăваш халăх артисчĕ А. К. Ургалкин хăйсен çивĕч таланчĕпе, пысăк ăсталăхĕпе кӳме пултарчĕç.

Эпĕ час-часах «Ялта», «Нарспи», «Энтип», «Отелло» тата ытти паха спектакльсене аса илетĕп. Аса илетĕп те, куç умне Б. А. Алексеев хăйĕн пысăк пултарулăхĕпе тата ĕçченлĕхĕпе çав тери паха туса çитернĕ сăнарсем — Мусса, Мăн-кĕрӳ, Энтип, Яго сăнарĕсем тухса тăраççĕ. Вĕсемпе пĕрлех эпĕ А. К. Ургалкин пурнăçри пекех ĕненмелле выляса кăтартнă. Çтаппан, Сетнер, Смолин, Кассио сăнарĕсене, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ П. О. Молодов çав тери витĕмлĕ, ĕмĕр асран каймн сăнласа кăтартнă Тăхтаман тата Отеллăпа Иван Шадрин сăнарĕсене куратăп.

Мĕн чухлĕ вăй тата тӳсĕм кирлĕ пулнă çак тарăн идейăллă, илемлĕх тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăмра тăракан сăнарсене туса çитерме!

Театрти артистсен коллективĕнчи хĕрарăмсем хушшинче те хăйсен ĕçне чунтан юратса тăвакан талантлă, пултаруллă сцена мастерĕсем сахал мар. Кунта эпир чи малтан Чăваш халăх артистки О. И. Ырземĕн хастарлă пултарулăхне палăртма тивĕç. Вăл чăваш театрне шăтса тухма пулăшакансĕнчен пĕри, унăн чи малтанхи Луизи, Нарспийĕ, Елюкĕ! 35 çул хушшинче Ольга Ивановна миçе роль вылянине шутласа та кăларас çук. Ăна пĕтĕм республикăри ĕççыннисем пĕлеççĕ тата чĕререн юратаççĕ

Çавăн пекех эпир паян театрта нумайранпа ĕçлекен юлташсене — Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсене—Л. Ф. Семенова, Е. В. Щорниковăна, Р. И. Ананьевăна, А. А. Долговăна, А. К. Маштановăна тата Г. Ф. Фадеевпа М. П. Иванова артистсене ырă ятпа асăнатпăр.

Театр коллективне Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн Мускаври ГИТИС-ран вĕренсе тухнă çамрăк артистсен ушкăнĕ хутшăнни Чăваш государство академи театрне татах та çĕнĕ вăйсемпе пуянлатрĕ. В. Родионов, Б. Марков, Т. Ерусланова (Евсеева), Г. Мадеева, П. Иванов, И. Алексеев, М. Алексеева, Н. Степанов, А. Лукьянова тата ытти çамрăк артистсем те хăйсен паха пултарулăхне кĕске вăхăт хушшинчех лайăх кăтартса пачĕç.

Паллах, театрăн ĕçĕнче паллă çитĕнӳсемпе пĕрлех, пысăк çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—унăн репертуарĕнче пирĕн совет саманинчи пурнăçа кăтартса паракан паха пьесăсем ытла та сахал пулни тата театр сцени çине хăш чух япăх, пулса çитмен пьесăсем кĕрсе кайни. Ку айăпа эпир, чăваш драматургĕсем, хамăр çине те илетпĕр. Театр руководителĕсем пирĕнпе — драматургсемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ пулин те, эпир начар ĕçдеме пултараймастпăр. Пирĕн театр 35 çула çитсе творчество тĕлĕшĕнчен чи пултаруллă тапхăра кĕчĕ. Анчах та эпир ăна лайăх, çĕнĕ пьесăсем памасăр, малалла татах та ăнăçлăрах ĕçлеме, пысăк, çĕнĕ çитĕнӳсем тума чарса тăратпăр.

Часрах пĕтересчĕ пирĕн ку çитменлĕхе! Кăна пирĕнтен парти, халăх ыйтать.

А. КАЛКАН,
Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

В. И. Ленин сăнарĕ чăваш сцени çинче

Эпĕ чăвашсен академи театрĕн сцени çинче 24 çул хушши ĕçлетĕп ĕнтĕ, çав хушăра 130 роль вылярăм.

Пуриншĕн те паллă: кашни ролĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ, хăйĕн сăн-сăпачĕ, характерĕ, шухăш кăмăлĕ пур. Вĕсене кашнинех ĕненмелле, кураканӑн чунне витмелле кăтартса памалла.

Хаçата вулакансене эпĕ В. И. Ленин сăнарне чăваш сцени çинче кăтартас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа парасшăн.

1944 çулта пирĕн театр Н. Погодинăн «Пăшаллă çын» ятлă пьесине хăйĕн репертуарне кĕртрĕ. Мана В. И. Ленин рольне пачĕç. Мĕн тери пархатарлă тата мĕн тери ответлă ĕç! Л. Н. Родионов режиссерпа пĕрле эпир, тĕплĕ материалсем ытларах тупас тесе, Мускава тухса кайрăмăр. Чи малтанах эпир Художественнăй театрта «Кремлевские куранты» ятлă спектакль куртăмăр, Вахтангов ячĕпе тăракан театрта Щукин артист Ленин рольне мĕнле хатĕрленнине кăтартакан материалсемпе паллашрăмăр. Кунсăр пуçне Ленин музейĕнчи документсене тĕплĕн вĕрентĕмĕр. Вара эпĕ хама валли çирĕп ĕç планĕ турăм. Çав план тăрăх Коммунистсен партийĕн историйĕпе Ленинпа Сталин произведенийĕсене çине тăрсах вĕренсе пытăм, вĕсен ячĕпе çыхăннă илемлĕ литература-кĕнекисене вуларăм, Ленинпа Сталин сăнарĕсене кăтартакан кинокартинăсене куртăм, халăх творчествипе ытларах паллашрăм. Çав вăхăтрах Ленин çинчен çырнă кĕнекесене, уйрăммăнах Сталин, Горький, Крупская, Луначарский, Клара Цеткина, Маяковский çырнисене пĕтĕм тимлĕхпе вуласа тухрăм.

Ленин рольне хатĕрленĕ вăхăтра пире икĕ-виçĕ хутчен Мускава чĕнсе илчĕç. Кашни каймассерен эпĕ çĕнĕ материалсем, çĕнĕ опыт туянса пытăм. Ленин музейĕнче мана Ленинăн тĕрлĕ вăхăтра ӳкернĕ 300 портретне тата унăн сассине çырса илнĕ икĕ пластинкăна парса ячĕç. Мускавра эпир Ленинпа Сталин ролĕсене вылякан артистсемпе — Штраухпа тата Гелованиппе курнăçса калаçрăмăр, вĕсем пире питĕ паха сĕнӳсем пачĕç. Эпĕ Ленинградра икĕ уйăх çурă пурăннăччĕ, çав вăхăтра темиçе хутчен те Смольнăйра пулнăччĕ, Ленинпа Киров кабинечĕсене кĕрсе курнăччĕ. Хамăн ĕçре мана çав экскурсисем те хытă пулăшрĕç.

1947 çулта Мускавра «Пăшаллă çын» пьесăна чăваш театрĕн сцени çинче кăтартма ирĕк пачĕç. Çапла вара, пĕтĕмĕшпе илсен, Ленин рольне эпĕ виçĕ çул хушши хатĕрлерĕм. Маншăн чи хакли, чи пахи Ленин рольне ĕненмелле, пĕтĕм хастарлăхпа вылясси пулнă. Эпĕ телейлĕ: чăваш театрĕн историйĕнче В. И. Ленин рольне малтанхи хут вылярăм. Хамăн чи ответлă ĕçе эпĕ ăнăçлăн пурнăçларăм тесе шутлатăп. Эпĕ чăн-чăн творчествăн савăнăçне туйрăм.

Хам енчен манăн артистсемпе драмкружоксенче вылякансене хамăрăн ĕçе чунтан юратса, пĕтĕм чун хавалĕпе туса пыма сĕнес килет. Пысăк роле те, пĕчĕккине те пĕр пекех тăрăшса вылятмарас килет. Пĕчĕккинчен пысăкки çуралать. Çапла вĕрентеççĕ аслă Ленинпа аслă Сталин.

Б. АЛЕКСЕЕВ,
РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш халăх артисчĕ.

Халăх артистки

Чăваш студенчĕсемпе красноармеецсем 1918 çулта Хусанта тăван чĕлхепе пĕррремĕш спектакль лартнăранпа вăтăр пилĕк çул çитрĕ...

Малтанхи спектакль валли çамрăк артистсем вырăссен чаплă драматургĕн, А. Н. Островскин «Не так живи, как хочется» ятлă пьесине суйласа илнĕ. Çак пьесăри тĕп рольсенчен пĕрине — Груша ятлă хĕр рольне Хусанти институт студентки пулнă Куснар хĕрĕ Ольга Шеетипалова вылянă. Сцена çине, залра йышлă халăх умне пирвайхи хут çеç тухнă пулин те, хăнăхманнипе çав тери хумханнă пулин те, вăл хăйĕн пĕррремĕш рольне питĕ лайăх, ĕнентерӳллĕ вылянă.

Пĕрремĕш спектакль ăнăçлă иртнĕ хыççăн хастарлă çамрăксем иккĕмĕш, виççĕмĕш спектакль лартнă. Ольга Шестипаловăна вĕсенче пуринче те тĕп рольсене выляттарнă. Хăйне ĕнтĕ яланхи хушаматпа мар, Ырзем тесе чĕнме пуçланă.

Çавăнтанпа О. И. Ырзем сценăна пăрахман. 1920 çулта театр Шупашкара куçса килсен, вăл та кунта килнĕ.

Шăп вăтăр пилĕк çул ĕçлет ĕнтĕ О. И. Ырзем чăваш театрĕнче. Çав хушăра вăл сцена çинче пурĕ 200 роль ытла вылянă. Ролĕсем, паллах, тĕрлĕрех пулнă. Чăваш халăхĕн пурнăçне, кĕрешӳне, унăн йăлисене кăтартакан пьесăсенче вылянисĕр пуçне, вăл вырăссен хальхи тата классикла пьесисенче те, Хĕвеланăç Европăри паллă драматургсен — Шекспир, Шиллер, Мольер, Лопе-де-Вега тата ыттисен пьесисенче те вылянă. Хăйĕн пултарулăхĕ нумай енлĕ пулнине, вăл çамрăксен сăнарĕсене те, ваттисен сăнарĕсене те пĕр пек ăсталăхпа кăтартнă, кулăшла рольсене те, хурлăхлă рольсене те аван вылянă.

Театра тăтăшах курма çӳрекĕ çынсем О. И. Ырзем хăшпĕр пьесăсенче темиçешер хут та, тĕрлĕ рольсене вылянине астăваççĕ. Сăмахран, вăл «Ялта» пьесăра Елюк рольне те, Йăскар рольне те вылянă, «Айдарта» Пинерпие, Сентиер амăшне тата ытти хĕрарăмсен ролĕсене те вылянă.

Юлашки çулсенче О. И. Ырзем ватăрах хĕрарăмсен ролĕсене ытларах вылять. А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» ромавĕ тăрăх тунă пьесăра вăл асламăш сăнарне лайăх кăтартса пачĕ. В. Ржановăн «Энтип» ятлă драминче Энтип арăмĕн—ырă кăмăллă, йăваш чунлă, килйышне çав тери юратакан, çĕнĕ пурнăç йĕркисене упăшкинчен те маларах ăнланса илнĕ Анюк сăнарне ĕнентерӳллĕ кăтартать. Çавăн пекех, Чехословакин нациллĕ геройĕ Юлиус Фучик çинчен çырнă «Пурнăçа юратса» ятлă пьесăра вăл фашистсене хирĕç хастаррăн кĕрешекен рабочи арăмĕн рольне лайăх вылярĕ.

Академи театрĕн юлашки спектаклĕнче—А. Эсхелĕн «Виçĕ туй» комединче колхозра чунне парса ĕçлекен Праски сăнарне лайăх кăтартса пачĕ.

О. И. Ырзем вылянă рольсене пурне те пишкĕрсе тухма май та çук. Çакна çеç калас пулать: вăл чăвашсен театр искусствине çĕклесе аталантарассишĕн питĕ нумай ĕçленĕ, театр ĕçне хăйĕн пĕтĕм вăйне панă. Вăл—чăваш халăхĕн чи юратнă, хисеплĕ артистки.

Эпир ăна малашне тата пысăкрах творчествăллă çитĕнӳсем тума, паттăр совет хĕрарăмĕсен сăнарĕсене сцена çинче нумай-нумай хутчен ĕнентерӳллĕ кăтартса пама ырă сунатпăр.

Л. АГАКОВ.

Халăх таланчĕсем

Чăвашсен академи театрĕ 35 çул хушшинче питех те паха ĕç турĕ. Пултаруллă артистсем лартса панă спектакльсенчен уйрăмах «Ялта», «Айдар», «Нарспи» куракансен асĕнчен тухмаççĕ. Ку пьесăсем нихçан та йăлăхтармаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ĕççыннисем «Ялта» пьесăна 600-мĕш хут, «Айдар» пьесăна 480-мĕш хут, «Нарспи» пьесăна 451-мĕш хут кураççĕ.

Чăваш артисчĕсем—вырăс артисчĕсенчен вĕренсе ӳснĕ артистсем, халăх юратакан талантлă артистсем пулса тăчĕç. Эпир Алексеев, Молодов, Семенов, Ырзем, Ургалкин, Шорникова, Никитин, Ерусланова тата ытти артистсене пĕрмай ӳссе пынăшăн хисеплесе юрататпăр.

«Нарспи», «Айдар», «Ялта» пьесăсенче пирĕн артистсем иртнĕ йывăр пурнăçа тĕрĕс сăнласа параççĕ.

Эпир чи телейлĕ те хаваслă тапхăрта—коммунизм тунă вăхăтра пурăнатпăр. Çӳлте асăннă спектакльсене курсан, кивĕ пурнăçа эпир чунтанах ылханатпăр, хальхи пурнăçра вара, çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тăвассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр, хавасланса ĕçлетпĕр.

Театр 35 çул тултарнă ятпа унăн пултаруллă коллективне эпир, куракансем, хĕрӳллĕн саламлатпăр. Малашне тата пысăк çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр.

А. ИВАНОВ,
Çыхăну управленийĕн сотрудникĕ.

Сцена çинче рабочисене курасчĕ

Юрататăп эпĕ чăвашсен академи театрне, юрататăп унăн талантлă артисчĕсене. Вĕсем совет çыннисен шухăш-кăмăлĕсене, коммунизм тăвакансен мухтавлă ĕçĕсене лайăх кăтартса пама тăрăшаççĕ, çамрăксене пурăнма, кĕрешме, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентеççĕ.

Эпĕ Шупашкарта вунă çула яхăн пурăнатăп. Çак вунă çул хушшинче чăваш театрĕ лартнă пьесăсене нумайăшне куртăм. Эпĕ совет саманинче çуралса ӳснĕ çамрăк, çавăнпа та ĕлĕкхи пусмăрлă пурнăç çинчен кĕнекесемпе атте-аннесем каласа панă тăрăх çеç пĕлетĕп. Анчах академи театрĕн сцени çинче эпĕ чăваш ĕççыннисем ĕлĕк асаплă пурăннине хам куçпа хам куртăм, пусмăрçăсен ирсĕр ĕçĕсене ылханатăм.

Пирĕн артистсем совет халăхĕн юратнă çулпуçĕсен — Ленинпа Сталин сăнарĕсене те тĕрĕс те витĕмлĕн кăтартаççĕ. Чăваш халăх артисчĕ Борис Алексеев Ленин рольне çав тери ăста вылять.

Кăçал эпĕ «Виçĕ туй» пьесăна курса савăнтăм. Анчах та манăн çакна калас килет: чăвашсен академи театрĕн сцени çинче эпир рабочисен пурнăçне, вĕсен ĕçне, шухăш-кăмăлне кăтартакан пьесăсем пачах курмастпăр. Эпĕ Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлетĕп. Ĕçре пулакан чăрмавсене çĕнтерме пулăшакан, рабочисен пурнăçне тĕрĕс кăтартакан пьесăсене сцена çинче курни ĕç тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшнă пулĕччĕ.

Сире, артистсемпе драматургсене, эпир хамăр цехра, хамăр фабрикăсенче часчасах курасшăн. Килĕр пирĕн пата, чунтан кĕтетпĕр!

К. ТОЛСТОВ,
Шупашкарти пир тĕртекен инкĕмĕш фабрикăри мастер помощникĕ.

Чăваш академи театрĕн артисчĕсем. Сулахайран сылтăмалла: лараççĕ—Р. И. АНАНЬЕВА, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки; О. И. ЫРЗЕМ, Чăваш халăх артистки; И. О. МОЛОДОВ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ; А. К. МАШТАНОВА, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки; А. К. УРГАЛКИН, Чăваш халăх артисчĕ. Тăраççĕ—Б. А. АЛЕКСЕЕВ, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата чăваш халăх артисчĕ; А. А. ДОЛГОВА, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки; Л. Ф. СЕМЕНОВ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ; Е. В. ШОРНИКОВА, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Ӳсĕм çулĕ çинче

Март уйăхĕн 14-мĕшĕнче Чăваш театрĕ ĕçлеме пуçланăранпа 35 çул çитрĕ.

Аслă Октябрьте ирĕке тухнă совет çыннисем Коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе кĕске вăхăтрах калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕç. Совет халăхĕ тĕнчере чи ирĕклĕ те хисеплĕ, чи пуян та культурăллă халăх пулса тăчĕ. Унăн коммунизм тăвас пархатарлă ĕçĕ тĕнчери мĕнпур ĕççыннисене тӳрĕ çул кăтартса, пусмăра хирĕç тата миршĕн кĕрешме чĕнет.

Аслă вырăс халăхĕн пысăк культурипе усă курса тата вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе чăвашсен театр искусстви те кĕске вăхăтрах палăрса тăракан çитĕнӳсем турĕ.

Революци хыççăнах чăвашла хаçатсем, кĕнекесем пичетлеме тытăннă. Талантлă юрăçсем чăваш юррисене пухса йĕркеленĕ, сценăна юратакан чăваш ывăл-хĕрĕсем, вырăсла пьесăсене куçарса, шкулсенче спектакльсем кăтартма пуçланă.

1918 çулта искусство ĕçне юратакан чăваш çамрăкĕсен пĕр ушкăнĕ Хусан хулинче чăваш театрне пуçарса янă. Камсем пулнă-ши вĕсем? Паллах, революциччен чăвашсем хушшинче театр ĕçне вĕреннĕ çынсем пулман. Хусанти чăваш театрне тĕрлĕ шкулсенче, институтсенче вĕренекен чăваш студенчĕсем тата Хусанта тăнă Хĕрлĕ Çар чаçĕсенчи чăваш çамрăкĕсем пуçарса янă.

Вĕсенчен паллăраххисем: Хусан университетĕнче вĕренекен студент, халĕ Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ — П. Н. Осипов, Хусанти художество шкулĕнче вĕренекен студент — И. С. Максимов-Кошкинский, Хĕрлĕ Çар боецĕ — Тал-Мăрза (Зайцев), Хусанти пединститутра вĕренекен чăваш хĕрĕ — О. И. Ырзем тата ыттисем те пулнă.

О. И. Ырзем сцена çине пуçласа тухнă чăваш хĕрарăмĕсенчен пĕри пулнă. Вăл сцена çинче 35 çул хушши пултаруллă ĕçленине палăртса, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ чăваш халăх артистки ятне пачĕ тата Хисеплĕ грамотăпа наградăланă. Ырзем нумай çул хушши К. В. Ивановăн Нарспи, П. Н. Осиповăн Пинерпи, Ф. П. Павловăн Елюк сăнарĕсене чи пултаруллă вылякансенчен пĕри пулнă. Ырзем халĕ совет хĕрарăмĕсен сăнарĕсене художествăллă пысăк туйăмпа выляса кăтартать. Унăн хастарлă ĕçне кура, кăçал ăна Шупашкар хула Совечĕн депутатне суйланă.

Чи малтанах, 1918—1922-мĕш çулсенче, чăваш театрĕ вырăссен классикла произведенийĕсене: Н. В. Гоголĕн—«Ревизор», «Женитьба», А. Н. Островскин—«Не так живи, как хочется», «Светит да не греет», «Лес», Л. Н. Толстойăн — «Власть тьмы», Хĕвеланăç Европăри классиксен — Шиллерпа Мольерăн пьесисене чăвашла куçарса, выляса кăтартнă. Театрта нимĕнле опытсăр ĕçлеме пуçланă чăваш артисчĕсене ку произведенисем реализмлă творчество çулĕ çине тухма пулăшнă.

Акимовăн «Вăхăтсăр вилĕм», Тал-Мăрзан—«Кам айăпĕ» драмисем асăннă тапхăрта чăваш репертуарĕн тĕп никĕсĕ пулма пултарайман, çавăнпа та чăваш театрĕ ку тапхăрта хăйĕн нациллĕ формине тупма пултарайман, ăна тупма пысăк художествăллă оригиналлă пьесăсем кирлĕ пулнă.

1920 çулта, Чăвашсен автономиллĕ облаçне тунă хыççăн, чăваш театрĕ Хусантан Шупашкара куçса килнĕ. Театр ĕçне çĕнĕ талантлă кадрсем хутшăннă, вĕсем хушшинче К. Е. Егоров (Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ), И. И. Илларионов (Иван Мучи), Г. В. Парне тата ыттисем те пулнă.

1923—1928 çулсенче чăваш театрĕ тавра талантлă драматургсемпе композиторсем пĕрлешнĕ: Ф. П. Павлов, В. П. Воробьев, П. Н. Осипов, И. С. Максимов-Кошкинский тата ыттисем те. Чăваш театрĕнче, вырăсларан куçарса лартнă пьесăсемпе пĕрле, чăваш пьесисене: «Ялта», «Судра», «Айдар», «Кушар», «Пуян Карук», «Нарспи», «Икĕ каччăн пĕр шухăш» пьесăсене пысăк ăсталăхпа кăтартма тытăннă. Ку тапхăра чăнах та ĕнтĕ чăвашсен хăйсен пысăк художествăллă драматургийĕ çуралнă тапхăр теме пулать, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра çырнă драмăсенчен нумайăшĕсем театр репертуарĕнче халĕ те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Чăваш театрĕ çак тапхăрта хăйĕн нациллĕ формине тупать.

Анчах театра малалла аталантарма нациллĕ формăна тупни çеç сахал, ун çумне тата социализмла содержани кирлĕ. Театрăн тĕп задачи: совет халăхĕн социализм тăвас ĕçне активлăн хутшăнасси, совет халăхĕ умĕнче тăракан паянхи ыйтусене çутатса парасси, çутă ĕмĕтсемшĕн малалла кĕрешесси пулса тăрать. Çӳлте асăннă пьесăсем, пурте пекех, ĕлĕкхи пурнăçа кăтартса паракан пьесăсем, паллах, вĕсем театрăн тĕп задачине пурнăçлама çителĕклĕ пулайман.

Ку задачăна пурнăçласси 1929—1930 çулсенче пуçланса каять. Совет халăхĕ Сталинла пĕрремĕш пилĕкçуллăха пурнăçлассишĕн кĕрешме тытăнать. Театр совет халăхĕн пурнăçĕнчи тĕп задачăсемпе тачă çыхăнма тăрăшать. Театр репертуарĕнче çĕнĕ, социализмла реализм меслечĕпе çырнă Биль-Белоцерковскийĕн — «Шторм», Крашенинниковăн — «Ледолом», Корнейчукăн —«Платон Кречет», Погодинăн —«Аристократы», «После бала» пьесисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Чăваш авторĕсем çырнă пьесăсенчен Осиповăн — «Çĕнĕ хум», «Кулленхи симфони», Максимов-Кошкинскин «Сатурпа Илем», Айзманăн — «Шав», Алагерăн — «Вăй», Агаковăн — «Хăват» ятлă пьесисене палăртма пулать. Вĕсем асăннă тапхăрти пурнăçа кăтартса, театра хăйĕн тĕп задачине пурнăçлама, социализмлă реализм çулĕ çине тухма пулăшаççĕ.

1929—1937 çулсенче чăваш театрĕ валли искусствăн çамрăк кадрĕсене хатĕрлесси анлăн сарăлса пырать. Театр çумĕнче студи, каярахпа театр училищи уçăлать. Искусствăна юратнă чăваш çамрăкĕсем искусство ĕçне вĕренме Мускаври, Ленинградри художествăллă аслă шкулсене каяççĕ.

Художествăллă шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăк артистсем театр творчествине тĕпренех профессионаллă ура çине тăратаççĕ. Вăл вăхăтра вĕренсе тухнă кадрсем халĕ театр пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăраççĕ: РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем: И. Молодов, Л. Семенов, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткисем: Е. Шорникова, А. Долгова, Р. Ананьева, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ — Н. Айзман тата ыттисем те уйрăмах палăрчĕç.

1933 çулта театра, творчествăллă пысăк çитĕнӳсем тунăшăн, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ йышăннипе, Чăвашсен государство академи театрĕ ятне панă.

1937—1940 çулсенче театр творчестви тата çӳлерех çĕкленет. Театр коллективĕ пикенсех К. С. Станиславскин творчествăлла системине вĕренме тытăнать, унăн репертуарĕнче М. Горький пьесисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Театр чăваш авторĕсем çырнă пьесăсене çĕнĕрен йĕркелесе, «Нарспи», «Айдар» драмăсене лартать.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче театрта ĕçлекенсем чылайăшĕ фронта кайнă пулсан та, театр хăйĕн творчествине тата çӳлерех çĕклеме тăрăшать, Мдиванин «Приказ по фронту», Шекспирăн — «Отелло» пьесисене лартса кăтартать. Каярахпа театр хăйĕн сцени çинче «Пăшаллă çын» пьесăна лартать, аслă çулпуççен сăнарĕсене — Ленинпа Сталин сăнарĕсене пысăк ăсталăхпа кăтартса парать. Ленин рольне — Б. Алексеев, Сталин рольне А. Ургалкин выляççĕ. Çавăн пекех, «Приказ по фронту» пьесăра И. Молодов артист Серго Орджоникидзе сăнарне лайăх сăнласа парать.

Театр коллективĕн пархатарлă ĕçĕшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ артистсене нумайăшне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕн ятне парать, Совет правительстви Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăлать.

Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн театр партин Центральнăй Комитечĕ 1946 çулхи августăн 26-мĕшĕнче «Драмăллă театрсен репертуарĕ тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление тата партин Центральнăй Комитечĕ идеологи тĕлĕшпе йышăннă постановленисене пурнăçлассишĕн активлăн кĕрешет. Чи малтанах театр хăйĕн репертуарне ăнсăртран лекнĕ, совет халăхĕн сăн-сăпатне тĕрĕс мар кăтартакан спектакльсене пăрахăçа кăларать, вĕсем вырăнне çĕнĕ пьесăсем лартма тытăнать. А. Фадеев романĕ тăрăх çырнă «Молодая гвардия», Суровăн «Секретарь райкома», Симоновăн «Чужая тень», Собкон «Свежий ветер», Буряковскин — «Юлиус Фучик», Дьяконовăн — «Свадьба с приданым», Мухаровăн — «Честь семьи» тата классиксен — Грибоедовăн «Горе от ума», Гоголĕн «Ревизор» ятлă пьесисем театр творчествинче паллă вырăн йышăнаççĕ. Чăваш авторĕсем çырнă пьесăсенчен театр Эсхелĕн — «Вут чулĕ», «Виçĕ туй», Кăлканăн — «Çывăх çăлтăрсем», Алагерăн — «Икĕ юлташ», Максимов-Кошкинскин — «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», Харлампьевăн — «Сурхи кĕвĕсем», Родионовăн — «Сенкер кӳлĕ», Павловпа Айзманăн — «Савнă тусăм, хура куçăм», Ржановăн «Энтип» ятлă пьесисене лартать.

Парти йышăннă постановленисем нумай писательсене театр ĕçне хутшăнтарма пулăшрĕç. Паллах, пирĕн писательсем паянхи куна совет халăхне çителĕклĕ çырлахтаракан пьесăсем нумаях çырса кăлараймарĕç, анчах та писательсем çĕнĕ темăсене çутатса пама тăрăшни, вĕсем кулленех вĕренсе пыни малашне пур енчен те ăнăçлă пьесăсем пулассине шантарать.

1947 çулта театр труппине театр искусствисен Мускаври государство институтĕ çумĕнчи чăваш студийĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк артистсем йышлăн хутшăнчĕç. Çакна пула театр творчестви тата çирĕпрех реализмлă никĕс çине тăчĕ.

Çамрăк артистсем кĕске вăхăтрах пысăк творчествăллă çитĕнӳсем турĕç, совет артисчĕн хисеплĕ ятне илтме тивĕçлĕ пулчĕç. Халĕ вĕсенчен нумайăшĕ чăвашла спектакльсенче чи паллă рольсене выляççĕ. Сăмахран, В. Родионов «Пурнăçа юратса» спектакльре Юлиус Фучик рольне, Б. Марков Коллинский рольне, вăлах «Ревизор» спектакльре Городничий рольне, Т. Евсеева — Нарспи, Пинерпи, Елюк ролĕсене, И. Алексеев — Сетнер, Ванюк ролĕсене, П. Иванов — Мăн-кĕрӳ рольне, Н. Степанов «Бронепоезд 14-69» спектакльре В. Окорк рольне, «Виçĕ туй» спектакльре Д. Столярова—Марье рольне, М. Алексеева — Укçине рольне ăнăçлă кăтартса параççĕ.

Паллах, театрăн творчествăллă ĕçĕнче çитменлĕхсем те çук мар. Халĕ, совет халăхĕн культури кунран-кун ӳссе пынă вăхăтра, пуринчен ытла пысăк художествăллă чăвашла пьесăсем çителĕклĕ пулманни чăваш артисчĕсене хăйсен мĕнпур творчествăллă хăватне анлăн уçса кăтартма чарса тăрать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ совет литературипе искусствине малалла аталантарас пирки татăклă кăтартусем пачĕ. Чăваш театрĕн коллективĕ, парти кăтартăвĕсемпе хавхаланса, хăйĕн пĕтĕм вăйне творчествăллă ĕçе хурса, совет халăхне тивĕçлĕ, идейăпа илемлĕх енчен паха спектакльсем хатĕрлессишĕн кĕрешет.

Н. ИВАНОВ,
Чăваш театрĕн главнăй режиссерĕ.

Клемент Готвальда пытарни

ПРАГА, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Чехословаки халăхĕ Чехословакири Коммунистсен партийĕн Председательне тата Чехословаки республикин Президентне Клемент Готвальда юлашки çула ăсатнă.

Хăйсен учителĕпе çулпуçĕн хаклă сăн-пичĕ çине юлашки хут пăхас тесе, Прага Кремлĕн Испански залĕ патне рабочисем, хресченсем, служащисем, студентсем, ватăсемпе çамрăксем, тĕрлĕ професси çыннисем вĕçĕмсĕр пырса тăнă. Вăхăт 10 сехет патне çывхарать. Зала кĕмелли юлашки минутсем çитнĕ. Хисеплĕ хурала Клемент Готвальдăн соратникĕсем—Антонин Запотоцкий, Вилем Широкий, Яромир Доланский, Алексей Чепичка, Карел Бацилек, Вацлав Копецкий, Антонин Новотный тăраççĕ.

* * *

Вăхăт 13 сехет патне çывхарать. Испански зала премьер-министр Антонин Запотоцкипе пĕрле правительство членĕсем, Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕсем, Чехословаки республикин президентне Клемент Готвальда пытарма Чехословакие урăх çĕршывсенчен килсе çитнĕ правительство делегацийĕсем, коммунистсемпе рабочисен партийĕсен делегацийĕсем кĕреççĕ. Залра ку вăхăт тĕлне Наци пухăвĕн депутачĕсем, столицăри ĕççыннисен представителĕсем; капитализмлă çĕршывсен дипломатиллĕ миссийĕсен представителĕсем пулнă. Дипломатиллĕ миссисен представителĕсем республика президентне Клемент Готвальда пытарма хăйсен правительствисен ячĕпе официально хутшăнаççĕ.

Залра çавăн пекех Клемент Готвальдăн тăванĕсемпе çывăх тусĕсем пур.

Хисеплĕ хурал кашни виçĕ минутра улшăнса тăрать.

13 сехет. Чехословакире 5 минутлăха пĕтĕм транспорт чарăнса ларать, çынсем ĕç пăрахаççĕ. Заводсем, фабрикăсем, пăравуссем кăшкăртса яраççĕ.

Испански залра Клемент Готвальд тупăкĕ умĕнче премьер-министр заместителĕ Вилем Широкий Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата правительство ячĕпе траурлă сăмах калать.

13 сехет те 25 минут. Клемент Готвальд соратникĕсем—Антонин Запотоцкий, Вилем Широкий, Яромир Доланский, Алексей Чепичка, Карел Бацилек, Вацлав Копецкий, Антонин Новотный тата правительствăсен делегаци членĕсем: СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Маршал Н. А. Булганин, Китай Халăх Республикин Государство Администраци Совечĕн премьерĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чжоу Эньлай, Польша Министрĕсен Совечĕн председателĕ Болеслав Берут тата Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ Цеденбал тупăка тирпейлĕн тытса çĕклесçĕ те ăна Испански залран илсе тухаççĕ. Клемент Готвальд тупăкне артиллери лафечĕ çине вырнаçтарса лартаççĕ. Траурлă процесси халăх тулса ларнă урамсем хушшипе Летнен площачĕ еннелле каять. Летнен площадĕнче çар чаçĕсем, халăх милици чаçĕсем тăраççĕ. Вĕсем Чехословаки республикин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй главнокомандующине, республика президентне Клемент Готвальда юлашки хут чыс тăваççĕ. Президент тупăкне трибуна умне лартаççĕ. Трибуна умĕнчен çарсем иртсе пыраççĕ.

Унтан траурлă процесси Вацлав площачĕ патне каять. Урамсенче çĕршер пин çын. Вĕсем хăйсен юратнă çулпуçĕпе сывпуллашаççĕ.

Вацлав площачĕ. Траурлă процесси Наци музейĕ патне пырать. Кунта Клемент Готвальд тупăкне лафет çинчен антараççĕ те çӳлĕ вырăна лартаççĕ.

Премьер-министр заместителĕ Антонин Новотный траурлă митинга уçать.

Премьер-министр Антонин Запотоцкий Чехословаки халăхĕ Клемент Готвальд хушса хăварнисене пурнăçа кĕртме пулни çинчен траурлă сăмах каласа тупа тăвать.

Совет правительствин делегацийĕн пуçлăхĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Маршал Н. А. Булганин сăмах калать.

Салют парса артиллери залпĕ кĕрлесе каять. Траурлă митинг хупăнать.

Тупăк умĕнчен машинăсем çине ларнă çарсем иртсе пыраççĕ. Вĕсем Чехословаки республикин верховнăй главнокомандующине, республика президентне Клемент Готвальда юлашки хут чыс туса ялавсене тайăлтарса иртеççĕ.

Клемент Готвальд тупăкне каллех артиллери лафечĕ çине лартаççĕ те, траурлă процесси Чехословаки ирĕке тухнă ятпа Витков сăрчĕ çине лартнă памятник-музей патне каять. Унта мавзолее Клемент Готвальд ӳтне хунă саркофага вырнаçтарса лартмалла.

19 сехет те 20 минут. Çар экскорчĕн генералĕсем Клемент Готвальд тупăкне тупă лафечĕ çинчен антараççĕ те правительство членĕсемпе тата урăх çĕршывсенчен килнĕ правительство делегацийĕсен членĕсемпе пĕрле тупăка Чехословаки ирĕке тухнă ятпа лартнă памятник-музее илсе кĕреççĕ.

19 сехет те 38 минут. Клемент Готвальд тупăкне мавзолее вырнаçтарса лартнă. «Интернационал» кĕвви çĕнтерӳллĕн янăраса каять. Артиллери залпĕ кĕрлет.

Чехословаки халăхĕ каялла тавăрса килме çук пысăк çухату пирки чĕререн хурланать. Анчах вăл хăйĕн мухтавлă ывăлĕпе Чехословаки халăхĕн çулпуçĕн ятне нихçан та манас çук. Вăл Клемент Готвальд çӳле çĕкленĕ ялав тавра тата тачăрах пĕтĕçет.

Халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕ уйăрнă комиссин ларăвĕ

ВЕНА, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 17-мĕшĕнче каçхине Венăра халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ирттернĕ Конгресĕ уйăрнă комиссин юлашки ларăвĕ пулнă. Çак комиссие Конгресс пилĕк аслă державăна чĕнсе калани çинчен правительствăсемпе халăхсене пĕлтерме тата ăна пурнăçа кĕртме хушнă.

Комиссие çаксем кĕреççĕ: Изабелла Блюм (Бельги), генерал Буксбаум (Бразили), Пьер Кот (Франци), Николай Тихонов, Илья Эренбург (СССР), пастор Эндикотт (Канада), Ив Фарж (Франци), Моника Фелтон (Англи), пастор Форбекк (Норвеги), Ивашкевич (Польша), генерал Хара (Мексика), Фредерик Жолио-Кюри (Франци), Горо Хани (Япони), Чэн Шен-ю (Китай), Сеза Набрави (Египет), Пьетро Ненни (Итали) тата ыттисем те.

Ларура ют çĕршывсенчи телеграф агентствисемпе пысăк хаçатсен представителĕсем нумай пулнă.

Ларăва Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри профессор уçнă. Вăл халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ирттернĕ Конгресĕ пилĕк аслă держава правительствисене чĕнсе каланине пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсен анлă массисем хапăл туса йышăнни çинчен калать. Çавăнпа та, тенĕ Жолио-Кюри, миршĕн тăракан нумай миллион шар çынсем умĕнче эпир пысăк ответ тытатпăр. Конгресс пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума чĕнсе каланине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе, çапла вара тĕнчере мир туса хурас тĕлĕшпе хамăр мĕн тума пултарнине пурне те тăвас пулать.

Жолио-Кюри хыççăн Пьетро Ненни тухса калать. Вăл халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă Конгресĕ пулнăранпа тĕнчере çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи влаçра тăракан ушкăнсем агрессиллĕ ĕçсене вăйлатнă пирки, тата ытларах ӳснине палăртнă. Паян, тенĕ Пьетро Ненни, пилĕк аслă держава правительствисене каласса таталлама, çапла вара сивĕ вăрçăна чарса лартма хыттăн калама вăхăт çитнĕ. Каласусем Германипе Австри ыйтăвĕсене мирлĕ майпа татса пама, Корейăра, Вьетнамра, Малайăра вăрçă ĕçĕсене чарса лартма май параççĕ.

Комисси ларăвĕнче совет писателĕ Илья Эренбург çапла калать: Совет правительствин политики мир тата халăхсем хушшинчи туслăх политики пулнă, вăл халĕ те çавăн пек политика пулса юлать, тенĕ. Совет правительствин пуçлăхĕ Маленков юлташ, тенĕ Илья Эренбург, кăçалхи мартăн 15-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче çапла каланă: «Хальхи вăхăтра интересленекен çĕршывсем пĕр-пĕринпе каласса таталнă тăрăх мирлĕ йĕркепе татса пама май килмен тавлашуллă е татса паман ыйту çук. Ку вăл эпир мĕнпур государствăсемпе, вăл шутра эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе çыхăну тытас ыйтăва та тивет. Мире сыхласа хăварма интересленекен государствăсем хальхи вăхăтра та, малашне те Совет Союзĕн мирлĕ çирĕп политикине шанса тăма пултараççĕ».

Эпир, тенĕ юлашкинчен Илья Эренбург, ырă шухăшлă мĕнпур çĕршывсене халăхсен Конгресĕ чĕнсе каланине йышăнма чĕнетпĕр. Пысăк инкеке сирсе яма май пур-ха. Миллионшар çынсене, вĕсем кирек ăçта пурăнаççĕ пулсан та, Лондонра е Парижра, Мускавра е Нью-Йоркра пурăнаççĕ пулсан та, çăлса хăварма май пур-ха. Культурăна хăрушă инкекрен çăлса хăварма май пур-ха. Халăхсем ответ кĕтеççĕ. Халăхсем мире хӳтĕлесе хăвараççĕ.

Илья Эренбург хыççăн генерал Буксбаум (Бразили), пастор Форбекк (Норвеги), пастор Эндикотт (Канада), Горо Хани (Япони), Фиггинс (Англи), Чэн Шен-ю (Китай), Ив Фарж (Франци) тухса каланă.

Юлашкинчен комисси, пĕр саслă пулса, общественноçа чĕнсе Воззвани йышăннă.

Научнăй конференци

Чăвашсен государство педагогика институчĕпе Ялхуçалăх институчĕ мартăн 14—15-мĕшĕсенче И. П. Павлов академикăн физиологи вĕрентĕвĕ çинчен научнăй конференци ирттерчĕç. Конференци ĕçне республикăри институтсенчи научнăй работниксем, врачсем, учительсем, ветеринари врачĕсем, зоотехниксем, республикăри хăшпĕр колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем, институтсенчи физиологи кружокĕсен членĕсем хутшăнчĕç.

Конференцие Чăвашсен государство педагогика институчĕн директорĕ К. Евлампьев юлташ уçрĕ. Вăл Иосиф Виссарионович Сталинăн çутă ятне ура çине тăрса хисеп тума сĕнчĕ. Конференцире пулнисем пурте ура çине тăрса аслă Сталина хисеп турĕç.

Конференцире биологи наукисен докторĕ А. В. Плетнев профессор «И. П. Павлов вĕрентĕвĕ тата диалектикăллă материализм», «Ялхуçалăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхĕн физиологийĕн И. П. Павлов вĕрентĕвĕнчен тухса тăракан ыйтăвĕсем» темăсем тăрăх, медицина наукисен кандидачĕ П. Н. Осипов «И. П. Павлов вĕрентĕвĕпе сывлăха сыхламалли тата профилактика учрежденийĕсенче научнăй тата практикăллă ĕçре усă курни» тема тăрăх, педагогика наукисен кандидачĕ Н. С. Степанов «И. П. Павлов педагогика енĕпе кăларса тăратнă идейăсене малалла аталантарни» тема тăрăх докладсем туса пачĕç.

Докладсем тăрăх 8 çын тухса каларĕ. Тухса калакансем И. П. Павлов физиологи çинчен вĕрентни материализмла тĕрĕс мировоззрени тăвас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртрĕç.

Конференцире пулнисем И. В. Сталин вилнĕ пирки хурланса Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне телеграмма яма йышăнчĕç. Телеграммăра вĕсем научнăй ĕçе активлă хутшăнма, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, совет çыннисен телейĕшĕн ырми-канми ĕçleme тупа турĕç.

Халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕ уйăрнă комисси общественноçа чĕнсе йышăннă воззвани

ВЕНА, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕ уйăрнă комисси мартăн 17-мĕшĕнче пулнă ларура общественноçа чĕнсе çакăн пек воззвани йышăннă:

Пире хушса панă поручени тăрăх эпир 1953 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче пилĕк аслă держава правительствисем патне халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕ чĕнсе каланине ярса патăмăр. Эпир вĕсене Мир Пакчĕ тăвас тĕллевпе каласусем пуçлама сĕнтĕмĕр.

1952 çулхи декабрь уйăхĕнче Венăра Конгресс пулса иртнĕренпе тĕнчери ларутăрура пулса тăнă улшăнусем çак чĕнĕвĕн пĕлтерĕшне тата ытларах ӳстереççĕ. Пур çĕрте те—Европăра та, Азире те вăрçă хăрушлăхĕ тата ытларах ӳсрĕ, вăл тата ытларах куçа курăнакан пулса тăчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăн тунă хăшпĕр килĕшӳсем пирки иккĕленме тытăннипе реваншистла вăйсем хавхаланма пуçларĕç. Çак вăйсем вĕсем агрессие вăйлатма пултараççĕ. Çак улшăнусем енчен илсе пăхса, халăхсем çакна ăнланаççĕ: хирĕçӳсене вăйпа усă курса е хăратса йĕркелеме çук; халăхсем çакнашкал меслетсене хирĕç хыттăнрах та хыттăнрах тăраççĕ, каласусем пуçламалли çул çине тăма калаççĕ. Çак каласусем пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума май параççĕ.

Çак каласусем вăхăтĕнче тата Мир Пакчĕ тунă хыççăн ку чухнехи мĕнпур ыйтусене йĕркелеме пулать.

Çак Пакт Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн пĕлтерĕшне тепĕр хут ӳстерет, çапла вара ООН ĕçĕ мĕнпур халăхсен хăрушсăрлăхне хӳтĕлесе тăракан ĕç пулать.

Çак задачăна пурнăçламалла тăвас тесе, эпир пилĕк аслă держава правительствисене çеç мар, тата ытти мĕнпур правительствăсене те чĕнсе калама кирлĕ тесе шутларăмăр. Вĕсен хăйсен халăхсем умĕнчи ответлăха тата вĕсен пĕтĕм этемлĕх умĕнчи тивĕçне кăтартса парса, эпир вĕсене пирĕн ĕçе пулăшма сĕнетпĕр. Правительствăсем мир ĕçне хӳтĕлессине, хăйсем вăрçа хатĕрленес ĕçе пулăшма кирлĕ тесе шутланă пекех, пулăшу парас пулсан, ку вăл тата та ытларах хаклă ĕç пулнă пулĕччĕ.

Анчах та хăйсен кун-çулĕшĕн ответлăха чи малтан халăхсем хăйсем тытаççĕ. Пирĕн саманари çынсем хăйсене çитес ăрусем ылханса асăнмалла тума парас мар тесен, вĕсен ĕçсене улăштарма çителĕклĕ таран вăйлă пулмалла, ăссăрланса вăрçа хатĕрленнине хирĕç тăрса, халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ирттернĕ Конгресĕ палăртнă пек, каласусем пуçламалли ăслă çул çине тăма çителĕклĕ таран вăйлă пулмалла. Хăйсен ответлăхне туйса тăракан арçынсемпе хĕрарăмсен, вĕсем кирек ăçта пулсан та, общество кирек хăш сийĕнче тăракан çынсем пулсан та, вĕсем кирек мĕнле организацире ĕçлеççĕ пулсан та, халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ирттернĕ Конгресĕ чĕнсе каланисем çине хăйсен правительствисем енчен ответ памалла тума хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пĕрлештермелле.

Пилĕк аслă халăх хушшинче Мир Пакчĕ туни этемлĕх кун-çулне татăклă влияни пама пултарать, вăл никам çĕмĕрейми хăватлă стена пулса тăма пултарать. Унăн хӳттинче пĕтĕм тĕнчери ачасем телейлĕ ӳсĕç.

И. В. Сталин ятне ĕмĕр асăнма

БУХАРЕСТ, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, И. В. Сталин ятне ĕмĕр асăнмалла тăвас тĕллевпе, Румынири Рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата Румыни Халăх Республикин правительстви, ĕççыннисем ыйтнине тивĕçтерсе, полиграфи комбинатне — «Скынтейя» çуртне, Сталин облаçĕнчи çĕнĕрен туса лартнă хими заводне тата Бухарестри çар академине И. В. Сталин ятне пама; 1953—1955 çулсенче Яссы, Клуж, Тимишоара, Плоешти, Галац, Констанца хулисенче И. В. Сталин ячĕпе памятниксем лартма; И. В. Сталин пурнăçĕпе ĕçĕсене çутатса паракан яланхи выставка вырăнне В. И. Ленинпа И. В. Сталин музейĕ уçма йышăннă.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăллă комитетра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 18-мĕшĕнчи ирхи ларура Политикăллă комитет ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн докладне пăхса тухма тытăннă. Ку ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăн кун йĕркине «Мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсемпе мĕнпур хĕçпăшалсене йĕркелесси, пӳлсе тăрасси тата виçеллĕ таран чакарасси», текен ятпа кĕртнĕ.

Пурне те паллă, ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕ 1952 çулта хăйĕн умне кăларса тăратнă задачăна пурнăçлама вăй çитерейменĕ. США, Англи, Франци тата ытти хăшпĕр çĕршывсен представителĕсем хирĕç тăнипе комисси тĕп задачăна татса параймарĕ. Вăл хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарасси çинчен тата атомлă хĕçпăшала чарса лартасси çинчен килĕшӳ тума пултараймарĕ, çавăнпа та нимĕнле решени те йышăнаймарĕ. Çак тĕп задачăна татса памалла тăвас вырăнне, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсем хыççăн пыракан ытти çĕршывсем комисси ĕçне тĕрĕс мар çулпа—хĕçпăшалсем çинчен сведенисем «палăртса тĕрĕслес» çулпа илсе пынă. Çавăн пирки те хĕçпăшалсене чакарасси çинчен тата атомлă хĕçпăшала чарса лартасси çинчен тăракан ыйтăва татса парассине пултлантарса лартнă.

Малтан сăмах илнĕ США представителĕ Гросс ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ĕçĕсем анăççăр пулнă пирки пĕтĕм ответлăха Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсем майлă тăракан ытти çĕршывсем çинчен сирсе ярса Совет Союзĕ çине йăвантарасшăн пулнă. Вăл Америка делегацийĕ ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссине хĕçпăшалсене «палăртса тĕрĕслесси» çинчен, чи малтан, яланхи хĕçпăшалсене «палăртса тĕрĕслесси» çинчен, çавăн пекех тата хĕçпăшаллă вăйсем «нумайран мĕн чухлĕ пулмаллине» палăртасси çинчен тăратнă сĕнĕве «хĕçпăшалсăрланас ыйтăва татса памалли» тата атомлă хĕçпăшала «чарса лартмалли» решени пулать, тесе кăтартма пур майсемпе те тăрăшнă, Америка делегачĕ çапла калани тĕрĕс мар пулни США сĕнĕвĕнче атомлă хĕçпăшала чарса лартма кирлине те, хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарма кирлине те шута илменнинчен лайăх курăнать.

США представителĕ ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕнче пăхса тухма Совет делегацийĕ хĕçпăшалсене тата хĕçпăшаллă вăйсене виçĕ пайран пĕр пайне чакарасси çинчен, атомлă хĕçпăшала чарса лартасси çинчен, çавăн пекех тата çакăн пек чарса лартнине пурнăçа кĕртнине пĕтĕм тĕнчипе çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла тăвасси çинчен тăратнă сĕну пирки нимĕн те хирĕç калама пултарайман. Вăл кун пирки пурĕ те: çак сĕну вăл «тĕтреллĕ», тенипе кăна иртсе кайма пăхнă.

Юлашкинчен США представителĕ США, Англи, Франци тата ытти хăшпĕр çĕршывсем пĕрле тăратнă резолюци проектне хӳтĕленĕ. Çав резолюци проектĕнче ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн хăйĕн ĕçне малалла туса пымалли çинчен тата çак ĕçĕн результачĕсем çинчен Генеральнăй Ассамблейăпа Хăрушсăрлăх Советне 1953 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр доклад тăратма кирли çинчен каланă. Резолюци проектĕнче çавăн пекех тата комисси членĕсене тав тунă. Анчах пурте пĕлеççĕ, США, Англи тата Франци хĕтĕртнипе комиссин ытларахăшĕ хĕçпăшалсене чакарассине тата атомлă хĕçпăшала чарса лартассине хирĕç тăнă.

Гросс хыççăн тухса каланă Бельги, Бразили, Турци тата Норвеги делегачĕсем пĕрле тăратнă резолюци проектне ырланă. Ку тĕлĕшпе вĕсем ООН-ăн хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн докладĕ тăрăх США йышăнакан позицие хӳтĕленĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче улшăнусем пулман. Фронтсенче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсемпе Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен разведка отрячĕсем хушшинче пĕчĕк çапăçусем пулнă.

Франци правительстви Аденауэртан çар договорĕсене ратификацилессине тăхтама ыйтать

БЕРЛИН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци правительстви çар договорĕсене виççĕмĕш хут сӳтсе явас тĕлĕшпе тăхтама ыйтса Бона çыру янă. Çак ыйтăва Аденауэра Францин Хĕвеланăç Германири верховнăй комиссарĕ Франсуа-Понсэ панă. Ĕнер Бонра паллă пулнă тăрăх, Аденауэр Франци правительствин ыйтăвне сирсе янă. Договорсене хăвăртрах ратификациleme кирлине никĕслесе, Аденауэр ĕнер бундестагри правительство коалицийĕн фракцийĕсен ларăвĕнче çапла каланă: договорсене ратификацилени договорсем пирки иккеленсе тăракан партнерсемшĕн «хавхалантармалли стимул» пулмалла, тенĕ.

«Нахт экспресс» хаçат çак ыйту пирки паян çапла çырать:

Аденауэр çакăн пек ответа Даллес хушнă тăрăх панă. Франци правительстви вара договорсене ратификацилессине тăхтаса тăма халăх масси хĕснипе Бонран ыйтнă. Вăл çапла майпа политика тĕлĕшĕнчен çĕршыври йывăрлăхсене сирсе яма вăхăт тупасшăн.

Атлантика блокне кĕрекен çĕршывсем вăрçа хатĕрленни

РИМ, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). АНСА агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Вăтаçĕр тинĕсре Çурçĕр Атлантика союзне кĕрекен çĕршывсен хĕçпăшаллă вăйĕсен çар маневрĕсем пуçланнă. Пĕр вăхăтрах икĕ маневр пырать. Пĕр маневрне США, Англи, Франци, Итали, Греци тата Турци карапĕсемпе самолечĕсем хутшăнаççĕ. Маневра Франци адмиралĕ Сала, Итали адмиралĕ Джирози тата Америка вице-адмиралĕ Кэссэди ертсе пыраççĕ. Тепĕр маневрне Америкăпа Итали карапĕсемпе самолечĕсем кăна хутшăнаççĕ. Маневра Америка адмиралĕ Кэрни тата генерал Шлеттер ертсе пыраççĕ.

Индире вăйлă çил-тăвăл пулнă

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Калькуттăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Индипе Хĕвелтухăç Пакистанра вăйлă çил-тăвăл пулнипе 35 çын вилнĕ, 700 çын аманнă. Пурлăхпа тырпул 10 миллион рупийлăх пĕтнĕ. Бенгалипе Ассамра 15 пин çын çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă.

ТУРЦИРЕ ÇĔР ЧĔТРЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Стамбулран çапла пĕлтерет: Дарданелл районĕнче мартăн 18-мĕшĕнче каçхине çĕр чĕтренĕ пирки 300—500 çын пĕтнĕ. Ку тĕлĕшпе официальнăй цифрăсем пичетлесе кăларман-ха.

Хĕвеланăç Анатолин пĕтĕм пайĕнче тата Центральнăй Анатолин пĕр пайĕнче çĕр чĕтренĕ. Генен тата Инидже хулисем хытă ишĕлнĕ.

ПАРИЖ, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Анкарăран çапла пĕлтерет: мартăн 18-мĕшĕнче каçхине Турцире çĕр чĕтренĕ. Çĕр чĕтренипе сиен пысăк пулнă.

Çĕр хыттăн чĕтренсе илни Хĕвеланăç тата Центральнăй Анатолире, уйрăммăн илсĕн, Стамбулпа Измир районĕсенче палăрнă. Халăх хăранипе урам хушшисене тарса тухнă.

ПАРИЖ, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Стамбулран пĕлтернĕ тăрăх, Фракире, Хĕвеланăç тата Центральнăй Анатолире çĕр чĕтренипе темиçе çĕр çын пĕтнĕ. Генен хули çурри таран ишĕлнĕ. Чанаккал, Стамбул тата ытти хуласем те чылай ишĕлнĕ.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ САУДОВСКИ АРАВИРЕ

БЕЙРУТ, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Байрак» хаçат Джиддăран пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Саудовски Аравире 3 пин Америка салтакĕ тăрать.

Ку салтаксем 10 пин Америка салтакĕсене вырнаçтарма лагерьсем тăваççĕ. Çав салтаксем халех Аравие пырса çитмелле.

ЕГИПЕТРИ ЛАРУ-ТĂРУ

КАИР, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америка Египета çакăн пек сĕнӳ панă: Египет «Вăтам Хĕвелтухăç командованине» кĕрет пулсан тата Суэц каналĕн зонинче хĕвеланăçри çĕршывсен базисене сыхласа хăварать пулсан, Англи хăйĕн çарĕсене Суэц каналĕн зонинчен илсе тухать. Çак сĕнĕве Египет йышăнман.

Англипе Америка сĕнĕвĕ пирки хăйĕн шухăшне каласа пама ыйтсан, Египет премьер-министрĕ Нагиб çапла каланă: «Египет—ним хирĕçсĕр тăмасăр эвакуаци тăвассине кăна килĕшме пултарать, эпир çакăн пек тăвассишĕн тăратпăр та».

Лайăх ĕçлекен письмоносец

КАЛИНИНО. Наталия Леонтьева район центрĕнче письмоносец пулса 11 çул ĕçлет. Ăна районти ĕççынниcем пурте лайăх пĕлеççĕ.

Н. Леонтьева юлташ хăйĕн ĕçне юратса туса пырать. Район центрĕнче пурăнакансем 638 экземпляр хаçат тата 711 экземпляр журнал çыранса илнĕ.

Г. МАЛЬЦЕВ.

ТĂРĂШУЛЛĂ ПРОДАВЕЦ

ÇĔРПУ. Хыркасси ялĕнчи магазин чылай вăхăт хушши тавар çаврăнăш планне тултарса пырайман. Магазин ĕçĕнче йĕркеллĕх пулман.

Халĕ кунта продавец пулса В. Алексеев юлташ ĕçлет.

Тăрăшса ĕçленине пула Алексеев юлташ тавар çаврăнăш планне чылай иртерсе тултарса пырать.

С. НИКИФОРОВ.

ПĔЛТЕРНИ

Мартăн 21-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче политшкулсен (пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекеннисен) руководителĕсен тата И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружоксен руководителĕсен семинарĕ пулать. Семинар руководителĕ—Л. Д. Эльбов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО

«РОДИНА»—мартăн 21-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеансенче «**Воздушный извозчик**». Каçхи сеанссенче «**Горячее сердце**», 16 тата 20 сехетре пуçланакан сеанссенче—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.

«УДАРНИК»—мартăн 21-мĕшĕнче «**Девушка моей мечты**».

КАНАШРИ УЧИТЕЛЬСКИ ИНСТИТУТ

заочнăй отделенине вĕренме кĕрес текенсенчен 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 15-мĕшĕччен заявленисем илет.

Заявленисемпе пĕрле çакăн пек документсем ямалла: автобиографи, аттестат е диплом (подлинник), ĕçре тăни çинчен калакан справка, виçĕ фотокарточка тата 2 тенкĕлĕх почта маркисем.

Вĕренме кĕрес текенсем çак предметсемпе экзамен тытаççĕ:

вырăс чĕлхипе литература отделенине—вырăс чĕлхипе литература, географи, СССР халăхĕсен историйĕ;

физикăпа математика отделенине—вырăс чĕлхипе литература, математика, физика;

естествознанипе географи отделенине—вырăс чĕлхипе литература, хими, географи.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем Канашра пулаççĕ.

Документсене çак адреспа ямалла: **Чувашская АССР, г. Канаш, учительский институт.**

ДИРЕКЦИ.

СССР ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХНЕ АТАЛАНТАРМАЛЛИ ГОСУДАРСТВЕННĂЙ ЗАЕМ (1951 ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ) ÇЫРĂНСА ИЛНĔ ГРАЖДАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

1953 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1951 çулхи кăларăм) облигацийĕсене подписчиксене памалли срок тухать.

Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе государство кредичĕн управленийĕ подписчиксене çакăн çинчен пĕлтерет: перекет кассисем СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1951 çулхи кăларăм) облигацийĕсене подписчиксене 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен параççĕ.

Подписчиксем кăтартнă срокчен облигацисене алла илмесен, вара илмесĕр юлаççĕ.

Чăваш АССР перекет кассисемпе государство кредичĕн управленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01336. Типографи №1—Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.